84
Ч—124



# В. МАЯКОВСКИЙ

ЧӐВАШ
ГОС
ИЗДАТ
1941



# В. МАЯКОВСКИЙ

13 июня 41
№ 84

*Сăвăсем*

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ● 1941

## РЕВОЛЮЦИ ПОЭЧĔ

Эпир пурăнакан ĕмĕр пуçламăшĕнче тата каярах та литературăра тĕрлĕ юхăмсем çуралаççĕ. Пушкинăн, Гоголĕн, Некрасовăн, Чернышевскин, Л. Толстойăн таса традицийĕсемпе пыракан аслă критиклă реализм ĕнтĕ хăйĕн юлашки сăмахне каланă. Халиччен тĕнче курман литература, хăвăрттăнах аталанма тытăннă пролетариллĕ литература çеç аслă классиксен çӳллĕ принципĕсене малалла илсе пыма, анлăлатма пултарнă.

Маяковскин творчествипе тĕплĕнрех паллашас тесен, çав юхăмсем çинче кăштах чарăнса тăма тиветех.

Империализм вăрçи умĕн иртнĕ ĕмĕр вĕçĕпе ку ĕмĕр пуçламĕшĕнче сарăлнă символизм, вуннăмĕш çулсенче кризис тӳссе ирттерсе пуçне çĕкленĕ символизм модăра пулнă (Блок, Брюсов, Бальмонт, Сологуб т. ыт. те). Символизм хăйĕн малтанхи тапхăрĕнче вилĕмпе юрату çинчен çеç юрласа вулакана „леш тĕнчене—çӳлти тĕнчене“ чĕннĕ. Çĕр пичĕ, имĕш, вараланчăк, таса мар, хурлăхпала

çеç тулса ларнă. Çын пурнăçĕ, имĕш, символ анчах, чăн-чăн пурнăç, имĕш, таçти шенкер тӳпере çеç тапранать.

Чăнах та, Александр Блок хăйĕн „Илемлĕ Дамине» шухăшласа кăларать, унпа супать.

Валерий Брюсов телейлĕхе самантлăхра (миг теорийĕ тенĕскерте) шырать.

Федор Сологубшăн çĕр çинчи пурнăç „Шуйттан таканкки“. Этем çав таканкка çинче сулланать-сулланать те—пăявĕ татăлать. Вара çыннăн ĕмĕрĕ иртет, çын ӳксе вилет.

Халĕ ĕнтĕ—вăрçă умĕн—символистсем декадентсем мар—пурнăçа шанманскерсем мар, пурнăçа хурлакан хуçăк кăмăллăскерсем мар вĕсем. Вĕсем ĕнтĕ хăйсен хĕвеланăçĕнчи романтикĕсен философилле ашшĕн—Шопенгауэрăн—пурнăçа хирĕç тăракан, пурнăçа шанман, ĕненмен вĕрентĕвĕсене маннă. Вĕсем ĕнтĕ халĕ пролетари литературине те, 1905-мĕш çула та хирĕç тăнăскерсем, империализмăн тарçисем.

Тепĕр пысăк юхăм вăл акмеизм е адамизм тенĕ юхăм. (Ку юхăмăн рыцарĕсем Н. Гумилев, З. Гиппиус, А. Ахматова). Вĕсем пурнăç Адам вăхăтĕнчи пек çирĕп те тĕреклĕ пулмалла тесе вĕрентнĕ. Идеологи-çке!—Империализмшăн пыракан вăрçăсенче колонисене илме тĕреклĕ çынсем кирлĕ.

Çак картах кларизмпа (çутăлăх, витĕр курăнаканлăх) эгофутуризм текен юхăмсем те

кӗреҫҫӗ. Ку юхӑмсем хӗрарӑмсен урисемпе чӑлхисене, ҫивӗчӗсемпе крепжоржет платьисене, каҫ пулас умӗн тӗлкӗшекен сӗмлӗхе, тата шампанскин шампа хырӑмлӑ бутылкисемпе пробкисене, кӳкӗрченӗн шурӑ чӳлмекӗсене (лилисене) мухтакан юхӑмсем.

Вӗсен хырӑмӗ те тутӑ, ҫиййӗ те питӗ пулнӑ, мӗншӗн тесен вӗсен журналӗсемпе изданийӗсене, искусствӑна „хӳтӗлекенсем", меценатсем—купецсемпе промышленниксем (Поляков, Рябушинский, Мамонтов), миххи-миххипе хут укҫа, енчӗкӗн-енчӗкӗн ылттӑн-кӗмӗл парса пынӑ. Ҫак меценатсем хӑйсен лакейӗсене—поэчӗсене—хӑйсен кӑмӑлӗсене килӗшӳллӗ япаласем ҫырма хушнӑ. Паллах ӗнтӗ, кӗреҫе сухалсемшӗн, кунӗпе халӑха улталанӑ хыҫҫӑн, салонсенче килленсе вуламалли, кӑмӑла хуҫман япаласем кирлӗ пулнӑ. Вӗсен поэчӗсем вара, эротикла—намӑс япаласем ҫырнӑ та!

Ҫак юхӑмсен канонӗсемпе приемӗсене, вкусӗсемпе манерӗсене аркатса тӑкас шутпа, литературӑна футуристсем ҫӗмӗрсе килсе кӗреҫҫӗ (Вл. Маяковский, Д. Бурлюк, В. Хлебников, В. Каменский т. ыт. те).

Футурум тени латинла сӑмах, пуласлӑх тенине пӗлтерет. Ку юхӑмӑн ҫыннисем дворянсен йӑхӗнчен тухнӑ ҫынсем мар, вӗсен именисем, литературӑлла виллӑсем пулман, вӗсен умӗнче ҫӳлчунлӑ меценатсем те ҫӗлӗ-

кӗсене хуҫман, вӗсен ҫиелтен пӑхсан имшеррӗн курӑнакан кӗнекисене вӗсем „Золотое руно“ журнала ылттӑнланӑ пек ылттӑнламан. Футуристсем—хура-шурра курнӑ, туйнӑ, тӳснӗ ҫынсем. Вӗсем, миллионсемпе вӗресе тӑракан хуласенче пурнаканскерсем, хӑйсен ҫӑкӑрне хӑйсен аллисемпе ӗҫлесе илеҫҫӗ; вӗсем хулан аял сийӗсене, вӗсен пурнӑҫне, шухӑшӗсемпе кӑмӑлӗсене аван пӗлеҫҫӗ.

Ҫак „йӗкӗтсем“ вӑл вӑхӑтри пӗтӗм искусствӑна хирӗҫ бунт ҫӗклеҫҫӗ. Типографи те, хут та пулман вӗсен. Вӗсем хӑйсене ӑнланаканӗсем пулӑшнипе, селедка чӗркекен хут ҫине пичетлесе, чӑптапа переплетласа хӑйсен литературӑлла манифесчӗсене кӑларӑҫҫӗ. Вӗсен „Пощечина общественному вкусу“ ятлӑ манифесчӗ 1912 ҫулта тухать. Мӗн ыйтаҫҫӗ, ыйтӑва мӗнле лартаҫҫӗ футуристсем?

„Кам хӑйӗн малтанхи юратуне манма пултараймасть, ҫав кайранхи юратӑва нихӑҫан та тупаймӗ“ теҫҫӗ вӗсем. Хӑйсен вӑхӑтӗнчи искусство никӗсӗсене салатас тӗлӗшпе вӗсем литературӑна тӗпрен хирӗҫ тӑраҫҫӗ. Классикла литературӑн корифейӗсене Пушкина, Толстоя, Горькие „Хальхи саманан карапӗ ҫинчен йӑтса ывӑтӑр“ тесе кӑшкӑраҫҫӗ. Паллах, ку вӗсен йӑнӑшӗ.

Урам чӗлхесӗр супать,
Ун кăшкăрмалăх,
каласмалăх
сăмахӗ çук[1],

тет Маяковский. Ку—урамсене, пасарсене, площадьсене çăвар туллин тухакан сулмаклă сăмах кирлӗ тенине пӗлтерет. Сăмах тени вăл хавхалантартăр, чӗресене çулăм кӗрттӗр, çунтартăр, аван ӗçсем тума йыхăртăр; сăмах тени вăл параппан пек хырăмлă буржуйсен чунӗсене пăчăкă пулса кастăр, вӗчӗлтеттертӗр!

Литературăра çӗнӗ приемсем, формăсем кирлӗ теççӗ футуристсем, хупă саспаллиллӗ слогсене — дыр-бул-шурсене — çул памалла теççӗ вӗсем.

Чăнах та, дачăсемпе салонсене питӗрӗнсе ларнă символистсемпе акмеистсем ти-ти-ти, пи-пи-пи, ля-ля-лясене çеç ирӗк панă. Вӗсем таçти çук тӗнчене ырласа юрланă, шăп уйăхпа шăп çăлтăрсем çинчен сонетсем çырнă, пурнăçран юриех тарнă, хӗвелпеле çынсен пурнăçне, прогресс тăвакан техникăн автомобилӗсемпе трамвайӗсене, телеграф сереписемпе прожекторсен çуттисене курман.

Футуристсем çак япаласене хăйсем çине илеççӗ. Йывăр пулнă. Ку бунт вакбуржуаллă

1 Кусарусем хамăн, С. Ш.

пĕччен сынсен бунчĕ çеç пулнă. Вĕсем сырнисене никам та пичетлемен, вĕсене ятланă, хăваланă. Анчах общественнăй деятель пулас тесен, хăвна итлеттерме, ху енне çавăрса пăхтарма пĕлмелле!

Футуристсем хуласем тăрăх лекцисем тума тухса каяççĕ. Вĕсем тумран та вăл вăхăтри костюмсен модинчен писеççĕ. Маяковский, лайăх фрак илме укçа çук пирки, галстук материйĕнчен сарă кофта çĕлетсе тăхăнать, Каменский çамки çине аэроплан ӳкерсе хурать, ыттисем кăкăрăн сулахай енчи кĕсъине чечек е шурă сăмса тутри чикес вырăнне сухан пуçĕ е кишĕр чикеççĕ.

Залсене пухăннă тутă зрительсемшĕн калама çук пысăк мыскара!—Вĕсем капăртатаççĕ, ши! шăхăраççĕ. Жандармсем пĕлнĕ, сиснĕ. Вĕсен искусствине хирĕç тăвăл çĕклени, вĕсен законĕсене те хирĕç тăни пулнă. Çавăнпа та футуристсем вечер хыççăн час-часах полици управленийĕнче çĕр каçнă.

Çак ушкăнра чи палли Владимир Владимирович Маяковский пулнă. Унăн пурăнăç çулĕ те, творчестви те футуристсен рамкине шăнăçман. Вăл хăйĕн юлташĕсенчен инçерех курнă, калама çук ăслă пулнă, нумайрах туйнă, сырнă, сулăмлă чĕри вăйлăн тапнă.

В. В. Маяковский 1893 çулхи июлĕн 7-мĕшĕнче ĕлĕкхи Кутаис кĕпĕрниничи Багдади ялĕнче, лесничий çемьинче çуралнă. Анчах

Володя вунвиççĕре чухнех унăн ашшĕ вилет. Çемье Мускава куçать. Килйышне тăрантарас йывăр шăпа çамрăк ачан тĕрекленсе çитмен хулĕсем çине ÿкет. Владимир ку ĕçе хăюллăн тытăнать. Амăшĕпе аппăшĕсем (Людăпа Оля) çĕвĕ ĕçне ĕçлеççĕ, хăй—тĕрлĕ картинăсемпе шакăрккасем туса пасара тухса сутать.

Владимир Кутаисри гимназинче вĕреннĕ чухнех Кавказри вăйлăн тапранса кайнă революциллĕ юхăма хутшăнать, марксистсен вăрттăн кружокне кĕрсе агитатор пулса ĕçлет, Маркс, Энгельс, Бебель произведенийĕсене вулать; 12 çула та çитменскер, 1905 çулти забастовкăсемпе демонстрацисене тухать; Мускава куçнă хыççăн ку пархатарлă çул вăйланса каять.

Мускавра Маяковский пиллĕкмĕш гимназие кĕрет, анчах часах вĕренме пăрахать, кайран çулталăк хушши Строгановский художественнăй училищĕре вĕренет. Анчах тĕрмесемпе арестсем ăна пĕр сăтăрккăн вĕренме май памаççĕ.

Чăн малтан Маяковскине 1908 çулхи мартăн 29-мĕшĕнче, РСДРП-ăн Мускав комитечĕн вăрттăн типографине полицейскисем аркатса тăкнă чух, арестлеççĕ, унăн шалти кĕсъисенчен вăрттăн хаçатăн экземплярĕсене тата прокламацисене туртса кăлараççĕ.

1909 çулта Маяковскине каллех арестлеççĕ. Айăп тупайман пирки тĕрмерен часах кăлараççĕ. Çак çулах, июльте, жандармсем Маяковскине виççĕмĕш хут арестлеççĕ, хальхинче ун çине пысăк айăп хума тăраççĕ.

Хĕрарăмсен тĕрминчен вунвиçĕ политикла каторжанка тухса тарнă. Маяковскин амăшĕпе аппăшĕсем вăл хĕрарăмсем валли тухса тармалли тумсем çĕленĕ. Анчах кăна жандармсем пĕлмен. Владимире, пĕрре çеç мар, „вараланнăскере“, юлташĕ патĕнче арестлеççĕ. Çамрăк революционере 3 çуллăха Туруханскри края ăсататпăр тесе хăратасшăн пулнă, анчах çул çитменни çăлса хăварнă.

Владимир Бутырски тĕрмере вунпĕр уйăх хушши пĕр пĕччен лармалли камерăра ларать, анчах вăл пуç усмасть: нумай шухăшлать, тÿссе irттерет, вулать, пурнăç çине тÿрĕ куççемпе пăхма тытăнать.

Тĕрмерен тухнă хыççăн: „Мĕн тумалла-ши, мĕне тытăнмалла-ши?“ тесе шухăшлать çăлăннă тыткăнçă. 1911 çулта вăл кĕркунне живопиçпе ваяни тата зодчество шкулне вĕренме кĕрет.

Маяковский сăнсем ÿкерме питĕ юратнă. Художниксем ăна: Эсĕ кисть çулĕ çинче хăвна тупăн, тесе хавхалантарнă, вара вăл ку ĕçе тăрăшсах тытăнать. Анчах поэт пуласса, çамрăклах поэзипе интересленнĕ пулсан та, вăл шухăшламан та.

Пĕррехинче Маяковскине Д. Бурлюк хăйĕн юлташĕсем патне илсе каять. — Акă манăн юлташ, чаплă поэт Маяковский! — тесе паллаштарать. Владимир тĕлĕнсе каять, ыттисем те тĕлĕнеççĕ, сăвă вулама ыйтаççĕ. — Ыран вулăп, — тет пулас поэт. Бурлюк хĕтĕртнĕçемĕн хĕтĕртет, ята ан яр, тет. Чăнах та, Маяковский тепĕр ирхине хăй сăввипе тĕлĕнтерет. Çапла вара 1912 çулта аслă художник мар, аслă поэт çуралать.

Улпутсемпе буржуйсен обществи çине тапăнасси, ăна кăтка йăви пек пăлхатасси, кӳрентересси, йĕкĕлтесси класс кĕрешӳне ăнланса илеймен футуристсен чи пысăк енĕ, — программи пулнă. Тутăлăхпа какăракан, ишĕлсе кайнă сăн-питлĕ господасен йăлисемпе законĕсем çине пур енчен те хаяррăн тапăнаканни вăл — Владимир Маяковский.

Поэт хăй тĕллĕн çеç тăрса юлнă. Вăл пĕччен. Ăна никам та итлемест те, ăнланмасть те! Капитализм обществинче вăл илемлĕн тата никам итлемен татăлса янăракан сĕрмекупăс кăна. „Татăлса янăракан сĕрмекупăс" ятлă сăввинче поэт çак шухăша каласа парать те ĕнтĕ. Чăнах та:

Пĕлетни, сĕрмекупăсăм,
Санпа эпир ытла та пĕр пек:
Ак эпĕ те, —
Кăшкăратăп, тусăм,
Анчах татса пама пĕлмен.

Музыкантсем поэтран кулаççӗ, ăçта сӗкӗнетӗн, теççӗ. Поэт çапла ответлет:

Сурассăм килет!
Эп тӳрӗ сын;
Сӗрмекупăсăм, пӗлетни,
Атя пӗрле юрлар кутруçăн,
Килӗшетни?

Ылттăн енчӗкӗ пуçпулса тăракан условисенче этемрен шăпăр хӳреллӗ те асав шăллă йытă çеç пулса тăрать. Этем чип-чиперех урампа утса пырать, паллакан хӗрарăма тӗл пулать, сывлăх сунасшăн—чӗлхе çук, çăвар уçать—асав шăлсем шакăртатса персе тухаççӗ, вăл полицейски постран меллӗн иртсе пырать—сӗлӗ кӗлти пысăкӗш хӳре шăтса ларать, чăн-чăн йытăсем—обывательсемпе фраклисем „хӳре!" тесе çухăрма тытăнаççӗ. Кашкăрсен хушшинче кашкăрла тенӗ чăвашсем:

Уссисене—шăпăрсене шăртлантарса
Тем пысăкӗш хаяр ушкăн ман çине йăвансан,
Эпӗ
тăват уран тăтăм та,
хаяррăн
хав, хав, хав тесе
вӗре пуçларăм.

(„Акă мӗнле эпӗ йытă пулса тăтăм" сăвăран).

Маяковский кăнтăрлахи апат ҫинчен, картла ҫапакансемпе взятка сăптăрса илекенсем ҫинчен, этемĕн шăпи ҫинчен сатирăллă формăпа гимнсем ҫырать.

Акă чи чаплă ресторанра тăранма пĕлмен тĕпсĕр хырăм ларать. Пĕрмай ҫиет, пĕрмай кӳпет. Ĕнтĕ кусĕсем те курăнмаҫҫĕ, янах айĕсем минтер пек усăнса аннă,—вăл бифштекссемпе автан шӳрписене тĕшĕрет ҫеҫ, лĕркет ҫеҫ. Урăх ун нимĕнле хуйхи те ҫук, кӳпсе ҫеҫ пултăр!

Акă взяткăсем тăпăлтаракан. Кăнтăрла улталаса илнĕ пинсене вăл пĕр каҫра пĕрре сулса выляса ярать. Ямасăр,—ыранхи кун каллех пинсем кӳрет.

Акă Перу ҫĕршывĕ (Россия ĕнтĕ, С. Ш.). Перура судьясем ҫеҫ пурнаҫҫĕ. Вĕсем колибрисене ҫеҫ мар, этемсене те тĕрмене хупаҫҫĕ. „Сутăнмалли сăвăсем спиртпа тан" тесе поэтăн (Маяковскинне, С. Ш.) сăввисене те суттармаҫҫĕ.

Поэт пур енчен те тапăнать, кĕвĕҫтерет, ҫиллентерет:

Парикмахер патне кĕтĕм те
Сăпайлăн каларăм:
„Ыр чунлă пулăр,
Тураса ярсамăрччĕ хăлхасене!"

(„Нимĕн те ăнланмаҫҫĕ" сăвăран).

Паллах, мастерӑн йӗтӗр пек тикӗс пичӗ кӗлулми пек кӳтӗркеленет, йывӑҫ ҫӑвӗпе якатнӑ ҫӳҫ-пуҫӗ сенӗкленет. Ҫӳҫе тураса якатаҫҫӗ, хӑлхасене тураса якатнине илтменччӗ тесе вӑл пӗҫҫисене шартлаттарать.

Сулӑмлӑ та катрашка мар, йӗклентерекен яка чӗлхепе ҫыракан символистсемпе акмеистсем уйӑхпа ҫӑлтӑрсене лампада теҫҫӗ пулсан, Маяковский уйӑха йӗк-сӗк тет, мӗншӗн тесен выҫӑ та телейсӗр ҫынна шӑн уйӑх сурма та кирлӗ мар.

Сехет хаяр харкашу пек тӑрать усӑнса.
Пиллӗкмӗш хыҫҫӑн улттӑмӗш ҫапрӗ.
Пӗлӗтрен Толстой пек мӑнаҫ пӑхса
Йӗк-сӗк ҫутатрӗ.

Маяковскин малтанхи сӑввисем форма тӗлӗшӗнчен уйрӑмӑнах паллӑ вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. (Футуристсен тӗп ыйтӑвӗсенчен пӗри вӑл форма ыйтӑвӗ пулнӑ). Поэт час-часах шухӑш хыҫҫӑн мар, форма хыҫҫӑн каять.

Форма оригиналлӑхӗ ан ҫухалтӑр тесе (ку чӑвашла куҫарсан ҫухалать тенине пӗртте пӗлтермест), эпир пӗр тӗслӗх вырӑслах кӑтартас тетпӗр.

Угрюмый дождь
скосил глаза,
а за
решеткой
четкой... т. ыт. те.

йĕркесене пăхсанах—форма хыççăн хăвалани палăрать.

Маяковскин революцичченхи творчестви çинчен калаçнă чух эпир цензура эпидемийĕ çинчен асăнмасăр хăварма пултараймастпăр. Поэт кайран нумай сăввисене малтанхи вариант тăрăх тунă, анчах, алçырăвĕсем сапаланса пĕтнипе, чылай сăвă пирĕн пата пичетленнĕ текстпах çитнĕ. Поэт хăй те ун чух асăрханса çырнă, анчах цензурăн рычаг пысăкĕш хĕрлĕ карандашĕ поэтăн мĕн чухлĕ шухăшне катман-ши, мĕн чухлĕ ылттăн сăмахсене юман шкапа хурса шăшисемпе йĕкехӳресене ваклаттарса яртарман-ши?

Поэтăн тăвăл кăларакан шухăшĕсем унăн трагедийĕсемпе поэмисенче анлăн курăнаççĕ.

„Владимир Маяковский" ятлă трагедин ролĕсене вылякансен ячĕсене çеç аса илсен те çӳç-пуç вирелле тăрать. Акă куççăр, урасăр этем, хăлхасăр этем, пуçне татнă этем; тăрăх (туртса тăснă) питлĕ этем, пĕчĕк куççуллĕ хĕрарăм, пысăк куççуллĕ хĕрарăм, тем пысăкĕш куççуллĕ хĕрарăм, темиçе пин çуллă хыткан хура кушаксене ачашлакан старик т. ыт. те.

Мĕнле асат хуçса, мĕнле чĕмере лутăркаса, мĕнле паралич çĕмĕрсе пĕтернĕ вĕсене? Паллах, пурнăç! Мĕнле пурнăç? Саламат сулăмĕпе тытăнса тăракан пурнăç!

Трагедин аслă геройĕ Вл. Маяковский çак хĕн-хурпа терт тўсекенсене, люмпенсене мудрец пек, пророк пек хăй патне чĕнет. Вĕсем кашни хăйсен хуйхи-суйхи çинчен каласа параççĕ, куççуле шăлса типĕтме тархаслаççĕ. Анчах поэт нимĕнпе те пулăшма пултараймасть. Аял си çынĕсен мăйĕсем çине хыткан хура кушаксем—эксплуатацин символĕсем—уртăннă.

Виçĕ кит—самодержави, православи, отечество—çинче тытăнса тăракан пурнăçра чăн-чăн таса юрату çук. Чĕре çуннине, ăш хыпнине мĕнле музыка инструменчĕ урлă каласа памалла-ши? Çук ун пек инструмент! Пулсан та флейта—çурăм шăмми çеç пулма пултарать.

Пуля пăнчипе
Пурнăçа вĕçлес мар-ши,—тетĕп,—
Çак шухăшпа ялан супатăп.
Тем пулас, тем килес—
пĕлместĕп!
Çампа сых ячĕшĕн паян
Сывпуллашу концертне паратăп.
. . . . . . . . . . . . . . . . . .
Паян эп флейтăпа янратăп,
Сўпенке çурăмăм шăммипе.

(„Флейта—çурăм шăмми“ поэмăран).

Поэтăн çўпçи те çук, тупри те çук. Вăл хăйĕн юратнă хĕрарăмне ни мерчен куçлă

çĕрĕ, ни кĕмĕл сулă, ни хаклă йышши чулсемпе эреш-мерешлесе пĕтернĕ мăйçакки пиллеме пултараймасть. Ăна вăл лайăх пĕлет:

Пĕлетĕп,
Хĕрарăмшăн кашниех тӳлет укçине.
Анчах та
пырĕ сана халлĕхе
Париж платьисен шĕлтĕркки вырăнне
Тапак тĕтĕмĕпе тумлантарсан та.

(Çавăнтанах).

Анчах та поэтăн мĕскĕн пӳлĕмне Вăл—кушил пек кĕсъелли пырса кĕрет, вăл поэт чунне—юратнă хĕрарăмне тăпăлтарса каять.

Юрату проблеми Маяковскин творчествинче пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ку енчен „13-мĕш апостол“,—„Йĕм тăхăннă пĕлĕт“ ятлă поэма питĕ кăтартуллă. (Поэмăн малтанхи ятне цензорсем улăштарма хушнă, мĕншĕн тесен Библи вĕрентнĕ тăрăх 12 апостол анчах, ăçтан имĕш В. Маяковский 13-мĕш пророк пулса тăрать!)

Поэтăн юратнă хĕрне—Марийине банкир—магнат илсе каять. Хĕр гостиницăна кĕрет те (ĕç Одессăра пулнă) ним хумханмасăр, сăпайлăн çапла калать:

Пĕлетĕр-и,
Эпĕ качча тухатăп.

Поэт ăна çав тери юрататчĕ, увăн хăйĕн чунĕ пин-пин кĕмĕл-ылттăн. Анчах капитализм сăпки çинче ярăнса ÿснĕ хĕр çĕтĕк кĕсъеллĕ çыннăн таса чунĕ çине сурать çеç, ăна тĕпсĕр кĕсъелли пултăр!

Пур енчен те асап çеç тÿсекен поэт „итлĕр-ха, господин турă" тесе „çÿлти аттерен" пулăшу ыйтать, анчах турă сасăсăр. Вара поэтăн хаяр çилли талпăнать:

Сана пур хăватлă
турă тесе шутлаттăм,
анчах эс тăмпай, çÿп-çап çеç иккен.
Куратни, пĕшкĕнетĕп,
атă кунчи ăшĕнчен
элес-мелес çĕçĕ илетĕп.
Çунатлă эсрелсем,
айкашăр райра!
Чĕтреннипе салатăр тĕкĕрсене!
Сана, ладăн шăрши çапнăскере,
пĕррех
янклаттарам—
кайса ÿкĕн Аляска патне!
Эй,
пĕлĕт,
хыв шлепкÿне!
Эп
пырап.

Анчах сас-чĕвĕ çук. Тĕнче вилнĕ пек çывăрать.

Маяковскин хирĕç тăни „Этем" ятлă поэминче тата уççăнтарах курăнать. Этем çуралсанах хуйхă-суйхăсăр ÿсет. Ÿссе çитсен— витĕр курма икĕ куçĕ пур, ĕçлеме, тĕлĕнтермелли япаласем тума икĕ алли пур, йывăра йăтма çурăмĕ пур, ырă япаласем шухăшласа кăларма пуç чашкинче—ылттăн сунтăхра—ăсĕ пур. Чăрмантаракансем, хĕсĕрлекенсем пулмасан, тен, вăл аванах та пурăнĕччĕ. Ку утопилле шухăш инкекне пĕлетпĕр те-ха, анчах Маяковский кунпа çеç çырлахмасть, çавă паха та!

Кунсен тертне чăтан,
Асап тÿссе ĕшеннĕскер,
Куç-пуç синче:
„Закон",
„Тĕн" —
чĕре çинчи сăнчăр.

Этем тыткăнра, тĕрмере. Ун хуçисем ăна франксен, долларсен, тенкĕсен, кронсен, иенсен, маркăсен тĕрмине хупнă. Çăлăнмашкăн унăн сумĕ çук, çапах та вăл „хăтарăр, çăлăр!" тесе кăшкăрать.

Çапла вара поэт самодержави çине кăна мар, унăн нравственноçĕпе моралĕ çине кăна та мар, Круппсем машинăланă хуласем çине кăна та мар, унăн—самодержавин—тĕнĕ çине кăна та мар, мĕнпур стройĕ çине тапăнать.

Мӗнле пӑхать-ши Вл. Маяковский янӑравлӑ сӑмах „отечество" çине? 1914 çулти империализмлӑ вӑрçӑ пӗтӗм тӗнчери çӗршывсене кисретме тытӑнать. Вырӑс империалисчӗсем, хӑйсен вӑрӑ-хурахла чӑн шухӑшӗсене вырӑс халӑхӗнчен пытарса, пӗтӗм Российӑна! —тӗне, самодержавие, тӑван çӗршыва сыхлатпӑр, тесе халӑха улталаса вӑрçа хуса кӗреççӗ.

Империалистсемпе улпутсем тата вӗсен интеллигенцийӗ пӗтӗм çӗршыв тӑрӑх шовинизмӑн сӗрӗмне тӗтӗрсе яраççӗ. Тӑрӑ пуçлӑ халӑха анкӑ-минкӗлетесшӗн сухӑраççӗ, ахӑраççӗ.

«Вӑрçа, вӑрçа, вӑрçа!!! Патша коронишӗн, чиркӳ хӗресӗшӗн, пусмӑр çӗршывӗшӗн вӑрçа!» Васкавлӑн кӑларнӑ каçхи хаçатсене сутакан газетчиксен сассисем те ӗнтӗ хӑрӑлтатаççӗ. Вӑрçа, вӑрçа! Бронза генералсен бронза утсем çине йӑвантарнӑ тушкисем те хирӗлеççӗ, карма çӑварӗсем: „Вӗçерӗр сӑнчӑрсене, эпир те тапса сикетпӗр" тесе йӑлӑнаççӗ. Вӑрçӑ вӑрçах вӑл. Шурӑ тум тумланнӑ дворянкӑсем тӗпелсене тарса пытанаççӗ. „Сирӗн каччӑр вилнӗ" тесе илнӗ телеграммӑран мӑнтарӑн хӗрсем йӗреççӗ, ватӑлӑхпа юлнӑ обывательсем хаçат çинче вуласа, пирӗнне Георги хӗресне панӑ тесе, кӗççе питпе те пулин мухтанаççӗ. „Сире намӑс мар-им?" тет поэт.

Сирĕнщĕн-им,
хĕрарăмсене
тата кўпме юратакансемшĕн-им
алхасма хатĕрлес кун-çулсем саккине?
Луччă хупахри юххасене пĕрерĕн
ĕçтерĕп
ананас шывне.

(„Вăрçă тапранчĕ“, „Сире“, „Анне тата нимĕçсем персе пăрахнă каç“ сăвăсене пăхăр).

Нумай писательсем фронта тухса каяççĕ. Инди джунглийĕсенче Редиард Киплинг поэт пек тигрсем тытса çўренĕ Н. Гумилев, океансемпе çичĕ тинĕс урлă каçса курнă, Аддис-Абеба хулинче Абиссини негусне сăвăсем вуласа панă Его Величество улан полкĕн офицерĕ Николай Гумилев та вырăс генералĕсен мука хĕçне мухтама Наполеон пек тимĕр-кăвак çăрха утланса хĕвеланăç енне вĕçтерет. Валерий Брюсов корреспондент пулса фронта каять, часах (16-мĕш çулта) Маяковскине те мобилизацилеççĕ.

Параппансемпе урра сассине, пăшал шартлатăвĕсемпе тупăсен кĕрлевне, хыпăнна лаша таканĕсемпе сулăнна хĕç чашлатнине кăшкăрса çĕнтерме пит те йывăр пулнă. Анчах Маяковский, аслатие кăшкăрса çĕнтерес пек, хăйĕн сассине хăюллăн та хаяррăн çĕклет, А. М. Горькийĕн „Летопись“ ятлă

журналĕнче пичетленнĕ „Вăрçăпа мир“ ятлă поэмине йăтса тухать.

Вăрçă вăл халер, мур чирĕ. Эпир тивĕçлĕ тата тивĕççĕр вăрçă пур иккенне пĕлетпĕр. Маяковский те, вăрçă вăхăтĕнче, тĕнче вăрçи тивĕççĕр вăрçă иккенне лайăх пĕлет. Анчах вăл вăрçăран мĕнле тухассине пĕлместха. Уншăн 14-мĕш çулхи вăрçă инкек-синкек, терт, хĕн-хур анчах. Миллионсем пĕтеççĕ, миллион уксах-чăлах, миллион тăлăхтурат... Сĕм вăрмансем вырăнĕнче çуннă хăрăк тункатасем анчах пуçĕсене каçăртса лараççĕ, хуласен вырăнĕнче кĕл парăлтатать... 16 государство çапăçать. Культура каялла чакать. Венецири, Парижри искусство произведенийĕсем тупă кĕрлевĕсенчен персе анса саланаççĕ. Вут, вут, вут! Халăх çапăçать, анчах милитаристсем хăйсен ривъерисенче çӳллĕшĕпе тĕлĕнтерекен бутылкăсенчен эрехсем сăрăхтараççĕ.

Маяковский: этем хăй, эпĕ, Маяковский, айăплă тет. Авал йĕрĕхсен умне пуçне каснă ачана эпĕ пăрахнă, тет, Севилье тĕрмисенче—подвалĕсенче инквизитор мар, эпĕ—Маяковский еретиксен куçĕсене шăтарнă, тет, Нерон мар, эпĕ—Маяковский цирксен арени çинче вилекен гладиаторсене ӳсĕр куçăмсемпе сăнăланă, тет т. ыт. те.

Каçарăр, каçарăр! Ӳкĕнӳре çамкана çапса шăтарăп, тет поэт.

Мĕн сĕнет Вл. Маяковский? Вăл таса этем килессе шанать, телей пулассине ĕненет. Анчах телее мĕнле майпа тупмаллине вăл ответлеймест-ха.

Çакăн пек „Вăрçăпа мирĕн“ тĕп шухăшĕ.

Мĕн çитмен поэта? Классен кĕрешÿне ăнланса илни, класлă этеме курни çитмен. Поэт пĕччен, вăл бунтарь. Вăл патша режимĕ çине пур енчен те тапăнать; выççисене, çуккисене, кĕлĕмçĕсене курать, вăл вĕсен пророкĕ, анчах çул кăтартайман пророк.

Патша Российĕ халăхсен тĕрми пулнă. Çав тĕрмене ишме большевиксен партийĕ çеç тĕрĕс çул кăтартса пынă.

Çак çул çине тăрайман арман чулĕ пек анлă кăкăрлă, пичетни çÿллĕш бунтарь Маяковский, клеткăри арăслан тимĕр решеткăсем çине тапăннă пек, самодержави çине тапăннă, ăна пĕтĕм чунĕнчен ылханнă, тĕрĕс çул шыранă.

Вăл çавах пурнăçа улăштармалли майсем шыранă. Вăл халăх телейĕ, çутă кунĕ шурăмпуç пек хăпарасса çавах хытă кĕтнĕ, революци пуласса шаннă:

„Революцисен йĕплĕ венокне тăхăнса
Килет вунулттăмĕш çул“,

тет вăл хăйĕн „13-мĕш апостол“ ятлă поэминче. Çапла вара Вл. Маяковский 17-мĕш çул революци пулассине пĕлсе 7—8 уйăх çеç йăнăшнă.

II

1917 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче пуçланнă çĕнĕ саманана, аслă Октябрь революцине Вл. Маяковский манăн революци, манăн çĕнĕ пурнăçăм тесе йышăнать, Смольнăя—революци штабне кайса ĕç ыйтать, совет культурин фронтĕнче ĕçлеме тытăнать, тулли кăкăрăн, тулли кăмăллăн, канăçлăн сывласа илет.

Буржуаллă интеллигенци революцие хирĕç çухăру тапратса ярать, коммунистсем вăхăтлăха çеç килчĕç тесе, вăрттăн та, уççăн та заговор организацилет, пролетарилле писательсене алă памасăр литпухусенчен демонстративно хăваласа кăларать (сăмахран, Серафимовича).

Ноябрĕн 7-мĕшĕ хыççăн та шпагипе эполечĕсене пăрахмасăр Петербург урамĕсем тăрăх яртлаттарса çӳренĕ Николай Гумилев, революцирен мăшкăласа „Атăшăннă трамвай" ятлă сăвă çырать, Исаакий соборĕ çине куçĕсене чармакласа пăхать, „православи никĕсĕнчен" пулăшу йăлăнать, анчах революци утать, вăл унăн юратнă хĕрарăмне те, хăйне те лучăркаса таптаса каять. (Каярахпа, офицерсен заговорĕнче активлăн ĕçленĕшĕн Гумилева Чека персе пăрахнă).

Тепĕр поэтесса (А. Ахматова): пурте юхăннă, сутăннă, тустарăннă, тесе ĕсĕклет. Революци малалла утать. Буржуази интел-

лигенцин прогрессивлӑ ҫынӗсем Маяковскипе пӗрлех Совет влаҫӗ енне тӑраҫҫӗ. Александр Блок хӑйӗн чапа тухнӑ „Вуниккӗн“ ятлӑ поэмине ҫырать, Валерий Брюсов ҫӗнӗ куна мухтаса ҫӗнӗ сӑвӑсем хывать, пысӑк общественник пулать, 19-мӗш ҫулта коммунистсен партине кӗрет.

Маяковский: февральти революцие ҫурма революци, тет. Патшана тӳнтерне, ун вырӑнне керенскисем ларма ӗлкерне, ҫавӑнпа та поэт Вӑхӑтлӑх правительствӑн: „Мӗн ҫӗнтеричченех!“ тенӗ лозунгне хирӗҫ тӑрать, ку—(империализмлӑ) вӑрҫӑ пирӗн вӑрҫӑ мар, милюковсен, гучковсен вӑрҫи, тет, окопри салтаксем валли ку вӑрҫа хирӗҫ тӑрӑр тесе, агиткӑсем ҫырать.

Маяковский революцийӗ—вӑл Октябрьти революци. Мӗнле хавасланать поэт, мӗнле хӗпӗртет!

Поэтсем халиччен чылай ӗмӗрсем хушши патшасене тата вӗсен йышне ырласа, кӑркка пек халтӑртатса, одӑсем ҫырнӑ. Маяковский „Революци оди“ ятлӑ сӑввинче Октябрь тӑвӑлне мухтать, ҫӗнӗ ӗмӗтпе, ҫӗнӗ хаваспа ҫунатланать. Кам кӑна кулман, мӑшкӑламан пролетарисен тӑвӑлӗнчен, кам кӑна ӑна таптаман, кам кӑна сурман ун ҫине!

Сана обывательсем питленӗ:
— виҫ хут ылханлӑскер, пӗтсем!—
Манран,—

Поэтран:
—Ӗмӗр пархатарлӑн тӑр ҫиҫсе!—

Маяковский кашни сӑввинчех халь большевиксем вӑхӑтлӑха мар—ӗмӗрлӗхе килни ҫинчен калать, нӑйкӑшакан классӑр-йӗрсӗр интеллигенци мар, ҫӗрӗн еткерӗ пролетариат анчах!

Акӑ „Левый марш". Ку марша Маяковский ҫӗнӗ ҫынсем валли—Балтика матросӗсем сӗннипе ҫырать. Вӑл халь кам валли ҫыртӑр, Керенскин Вӑхӑтлӑх правительствине Хӗллехи керментен „Аврора" тупписемпе тӗшӗрсе кӑларакансемшӗн ҫырмасан!

Акӑ искусство армисене панӑ приказсем. Пӗрремӗш приказра поэт поэтсене, музыкантсене, параппан ҫапакансене урамсемпе площадьсене тухма, баррикадӑсем ҫине тӑма, ҫӗннишӗн кӗрешме чӗнет, Коммуна искусствине тума йыхӑрать. Иккӗмӗш приказра поэт кив искусствӑн йӗк-сӗкӗ, тӑкакӗ ҫине тапӑнать. Вӗсем авалхиллех комнӑтӑсене питӗрӗнсе юласшӑн, аслӑк пек ҫӳҫӗсене саланнӑ салонсенче ластӑртаттарса ҫӳресшӗн. Поэт ыйтӑва тӗрӗс лартать: чунӑр пулсан, ҫӗнӗ искусство енне куҫӑр, куҫманнисене пӑшал луши пырса антратӗ! тет. Искусство ҫӗнӗ пурнӑҫа, ҫӗнӗ производствӑна мобилизацилен-ме пулӑшмалла. Паровозсем Донбасран кӑмрӑк парӑр теҫҫӗ, пароходсем Бакуран нефть тилмӗреҫҫӗ, ҫӗнӗ япаласемпе ҫӗнӗ отноше-

нисем, çĕнĕ формăсем ыйтаççĕ... Çак тĕлĕшпе поэтăн пĕтĕм вăй-халне хурса ĕçлемелле, тет Маяковский, мĕншĕн тесен республикăна пылчăклăхран сĕтĕрсе кăлармалла.

Çĕнтерӳ идеи Маяковскин произведенийĕсенче уççăн та уççăн палăрма тытăнать. Октябрь революцийĕ пĕр çул тултарнă тĕле поэт „Мистерия Буфф" ятлă пьеса çырать, сцена çинче лартать. (Мистери тесе вăтам ĕмĕрсенче святойсемпе мучениксем çинчен çырнă пьесăна каланă, Буфф тени кулăшла кĕске представлени). Маяковский потоп çинчен хунă Библи сюжетне илет. Пьесăра та çичĕ мăшăр таса (буржуйсем), çичĕ мăшăр таса маррисем (пролетарисем). Хаяр кĕрешӳ тапранать. Потоп вăл, çĕнĕ ăнланупа, пĕтĕм тĕнчене ярса илнĕ революци. Таса маррисем тасисене ковчегран шыва ӳплентереççĕ, агитатор ертсе пынипе кĕтнĕ çĕршыва—Совет Российине ишсе çитеççĕ. Пьесăра рабочисем хăйсемех вылянă, кайран темиçе хут та лартнă.

1920-мĕш çулта Маяковский „150 000 000" ятлă героикăллă поэма çырать. 150 миллион вăл — вăл вăхăтри Россия халăхĕ. Поэма геройĕ Иван ятлă. Вăл пĕтĕм халăхăн пĕрлешӳллĕ, пурне те çĕмĕрекен вăйĕ. Иванăн аллисем — Нева, ури кĕлисем — Каçпи тинĕсĕ панче. Иван çине Америка президенчĕ Вудро Вильсон мĕнпур интервенцин паттăрĕ — тапăнасшăн.

Иван пĕрре ярса пусать те — çӳл тусем, сĕм вăрмансем урлă каçать, тепре пусать те — тинĕссемпе океансем урлă каçать. Иван килет тенĕ хыпар электричество винчĕсем çинче ларакан Чикагона çитет. Çӳç-пуçĕ вирелле тăнă Вильсон хыпăнса ӳкет.

— Мĕнле Иван? Ăçтан? Кам вăл?.. Ылттăнланă отельри Вудро, боксерсем массаж тунă хыççăн (унччен вăл Иоркшир сысни пек аран йăваланкаласа çӳренĕ), бронь тум тумланать, Ивана кĕтсе илет. Хĕçпеле пĕрре касать те хĕç Иванăн çара ӳтне 3—4 çухрăма чашлатса кĕрсе каять, анчах пĕр тумлам юн та çук! Вудро тĕлĕнет. Иванăн суранĕ çавăнтах сипленет. Иван хăйĕн аслă историйĕнче нумай тӳснĕ, нумай чăтнă, нумай çĕнтернĕ, халĕ те вăл — çара алăллă Иван—пĕрре çеç сулать те — Вудро Вильсонран йĕпе вырăн анчах тăрса юлать.

Хăтарăннă халăхра никам çĕнейми хăват тытăнса тăрать. Çак поэмăн тĕп шухăшĕ.

Маяковский ку поэма айне хăйĕн хушаматне те лартман, ытти поэтсем, халăх юрă ăстисем çырса пĕтерччĕр тенĕ, мĕншĕн тесен кĕрешӳ пĕтмен-ха, кĕрешӳ пырать.

Çак поэма пирки калаçнă чух поэтăн мĕнпур творчествин пĕр принципĕ çинчен калаçмалла — вăл гиперболизм тени. Маяковский хуть те хăçан та япалана хăйĕн виçин-

чен темиçе хут пысăклатса кăтартать. Çапла кăтартни образа вăйлăлатать, вăл (образ) вулакан куçĕ умне ярах тухса тăрать. Калăпăр, Маяковский турра вирлĕн кăна янклаттарăп тет те — Аляска патне кайса ӳкĕн, тет. Кулăшла та сулăмлă та!

А. В. Луначарский пулăшнипеле Вл. Маяковский „Искусство Коммуны" ятлă хаçат организацилет, унта активлăн ĕçлет, 1919 çулта — граждан вăрçи хĕрсе пынă вăхăтра — Маяковский РОСТ-ра (Российское телеграфное агентство) ĕçлеме тытăнать. Вильсонсем, Ллойд Джоржсем, Черчильсем организациленĕ интервентсем Совет Российĕ çине тăватă енчен тапăнаççĕ. Фронта пăшалсемпе снарядсем çеç мар, витĕмлĕ плакатсем, воззванисем, çивчĕ сăвăсем те кирлĕ. Çĕршывăн типографийĕсем те, полиграфи хатĕрĕсем те тусăнса пĕтнĕ. Маяковский хăй тавра художниксене пухса (вăл хăй те ятлă художник) карикатурăсем тума тытăнать, плакатсем айне пуриншĕн те ăнланмалла, сулăмлă куплетсем сырать. Михĕ çакса çӳрекен спекулянтсем, суя хыпар саракан сĕтĕрĕнчĕксем, иртнĕ куншăн ахлатакан дворянкăсем, колчаксем, махносем, врангельсем, юденичсем, красновсем... пурте поэтăн çивчĕ сăнни — пери çине тирĕнеççĕ.

Поэт, ыйха манса, çĕрĕн-кунĕн ĕçлет. Çĕнĕ йăла çинчен вĕрентсе, çĕнĕ сăвăсем сы-

рать, тёне хирёç кёрешет. Аршăн виçине—метра, кёрепенкене—килограма куçармалла, конфет этикечёсене советла темăпа тумалла... Маяковский ку енчен те, кун пек проза поэзи ĕçĕ мар тесе кăшкăракансем пинĕн пулсан та, ăша юлакан агиткăсем çырать.

Çĕнĕ кун çĕнтерсе пĕтĕм фронтпа наступлени туса пынине Маяковский нихăçан та манмасть, вăл хăй унăн деятелĕ, гражданинĕ. Поэзи историйĕ ун пек оптимизмлă поэт курман-ха!

Акă „Çулла дачăра Владимир Маяковскипе пулнă тĕлĕнмелле мыскара" ятлă сăвă: Çӳлте хĕвел çутатать, çĕрте вăл,—Маяковский, çутатать. Пур çĕрте те çутă, илемлĕ, хаваслă.

Ялан çутат,
çутать ăçта та,
сӳнми çутатмалла сан,
çутат нихçан чакми хăватăн!
Çапла
хĕвелпеле ман лозунг!

Çапла ĕнтĕ хĕвелпеле поэтăн ĕмĕчĕ.

Граждан вăрçи иртрĕ. Çамрăк республика ĕмĕрлĕхе çĕнтерчĕ. Поэт çĕнĕ темăсем çĕклет, уçать. Çĕршыв юхăнса çитнĕ, хуçалăха çĕнĕ пусăм çине хăпартмалла. Поэтăн ĕçĕ—энтузиастсем çинчен, çĕнĕ ĕçĕн формисем—субботниксем çинчен агиткăсем, лозунгсем çырмалла. Поэт хаçатсенче ку тĕлĕшпе пархатарлăн ĕçлет.

Çынсем пурте советланса çитеймен-ха. Сăсар çĕлĕк тăхăннă нэпмансем, тилĕ тирĕ ăшне путнă мещенсем, тĕрлĕ чиновниксем—бюрократсем Совет влаçĕпе тавлашасшăн, çиеле тухасшăн. Поэт хăйĕн бритва пек ялкăшса тăракан сатирипе — йĕплĕ çăмахĕпе— тухать; трибун сасси киввине хуплать, таптать.

Акă „Çӳп-çап çинчен“ хывнă сăвă. Тăвăлсем иртсе кайнă, самана лăпланнă. Ăшăрах кĕтес шыракан тĕрлĕ мещен кашни кĕтесрен хăйĕн кĕççе çĕленĕ питне кăтартать. Учреждениссене вырнаçать, шалу ӳстереççĕ тесе хĕпĕртет, арăмне Надя юлташ тесе чĕнет, лешĕ платье çинче çурлаллă-мăлатуклă эмблема пултăр тесе кĕçенет. Стена çинче Маркс сăнĕ, „Известия“ хаçат çинче çăмламас кушак мăрăлтататать, мачча çинче клеткăра саркайăк шăхăрать, чилетет... Тьфу! Йĕк-сĕксем, киввин тăкакĕсем, çĕнĕленнĕ çичĕ питсем! „Врангельтен усалрах обывательле йăла“ тет поэт.

Акă „Ларса юлнисем“ ятлă сăвă. Учреждение бюрократсем нимĕн те ĕçлемеççĕ, хут тĕркисене чиксе заседаниren заседание анчах сĕтĕрĕнеççĕ. Анаслаççĕ, чĕлĕм мăкăрлантараççĕ. Ку заседанисене пĕтерме тепĕр чăн-чăн ĕçпе çыхăннă заседани кирлĕ! Çак сăвă 1922 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче „Известия“ хаçатра пичетленсе тухнă. Тепĕр кун-

не Пĕтĕм Российăри металлистсен съезчĕн коммунистла фракцин заседанийĕнче В. И. Ленин тухса çапла каланă:

„Ĕнер эпĕ „Известия“ хаçатра политикăллă темăпа Маяковский çырнă сăвва ăнсăртран вуларăм... Политика тата администраци енчен пăхсан, нумайранпа ĕнтĕ манăн кун пек кăмăл тулли пулман. Хăйĕн сăввинче вăл ларусенчен çав тери мăшкăласа кулать, хăйсен ĕçкунне ларусенче ларса иртерекен коммунистсене тăрăхласа кулать. Пĕлместĕп, мĕнле-тăр поэзи енчен, анчах политика енчен ку пĕтĕмпех тĕрĕс тесе шантарақăп“. (В. И. Ленин, Сочинения. 3-е изд., том. XXVII, стр. 177). Çапла хакланă пĕтĕм тĕнчери пролетарисен вилĕмсĕр çулпуçĕ Владимир Ильич Ленин Маяковский сăввине.

НЭП вăхăтĕнче çырнă произведенисенчен Маяковскин чи паллă япали вăл „Çакăн çинчен“ ятлă поэма. Ку поэмăра поэт каллех юрату теми патне таврăнать, вăхăтлăха иккĕленнĕ пек пулса тăрать. Вăл, хам ĕмĕрĕмре чун туллин юратса кураймарăм тесе пулас, 30-мĕш ĕмĕрти химикпе калаçать, мана ун чух чĕртĕр, эпĕ сирĕн патра швейцар пулса та пулин пурăнăп тесе тилмĕрет. Маяковский юлташ! тесе чĕнсенех, пĕтĕм çĕр этем енне çаврăнса тăрасса, пĕтĕм тĕнче

атте туласса, çĕр — анне пуласса, çав вăхăт-сем час çитессе пĕтĕм чун-хавалĕпе шанать.

III

1924 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче В. И. Ленин вилет, пĕтĕм çĕршыв хура траур тăхăнать, пĕтĕм тĕнчери пролетарисем Ленинăн ырă ятне асăнса 5 минут хушши ĕçлеме чарăнса пуçĕсене таяççĕ. Çулпуçĕ вилнĕ тенĕ хыпар аслă туйăмлă поэта ӳпки-пĕверĕ, шăмми-шакки таран витет. Поэт çулпуçăн ятне илемлĕ литературăра вилĕмсĕрлететесшĕн хыпăвма тытăнать. Вăл ку ĕçе тумаллах, мĕнпур шухăшĕ-кăмăлĕ, пысăк чĕри хушать.

Вл. Маяковский Ленина лайăх пĕлекен çынсемпе тĕл пулса калаçать, кĕнекесем нумай вулать, материалсем хатĕрлет, хăват çитессине хăюллăн шанса хăй çине калама çук пысăк та ответлă тема илет.

Ленина хăйĕн сăнне — чĕрĕ сăн памалла. Вăл кашни пролетаришĕн çывăх тус, юлташ, тăшманшăн — вулкан, вут хыптаракан çавраçиллĕ тăвăл. Çак пахалăхсене кăтартать те ĕнтĕ Маяковский.

Кам вăл Ленин? — ку вăл поэмăн тĕп ыйтăвĕ. Ответ парас кăмăлпа поэт Марксран пуçласа хамăр кунсене çитичченех ĕçхалăхĕн класлă кĕрешӳне кăтартса парать.

Гений тесен, авал вăл çын ăсран кăна мар, пӳ-сирен те Улăп пек пулĕ тесе ăнланнă, „пат-

ша пек курăнать", „ăсхакăлĕ туррăн" „Эра" тесе каланă.

> Анчах ку „Эра"
> алăкран кĕнĕ чух та
> пуçĕпе алăка тивмен, тет поэт.

Ленин пĕтĕм тĕнчери пролетарисен аслă çулпуçĕ, ĕçхалăхĕн тусĕ, çул кăтартаканĕ, çутă пурнăçăн çутă алăкĕсене уçса паракане. Акă кам вăл Ленин.

Маяковский сăмах çинчен, поэмăн стилĕ çинчен пит нумай шухăшланă. Çапла вара хăйĕн поэмине пурне те ăнланмалла, аса юлакан сăмахсемпе çырать; çапла вара Маяковскин Ленин çинчен çырнă поэзин чи паха, чи лайăх итогĕ тата класлă кĕрешĕвĕн хĕçпăшалĕ пулса литературăн ылттăн фондне кĕрет.

Çак сулăмлă талпăну тата пархатарлăн тунă ĕç хыççăн Вл. Маяковский ютçĕршывсене курса çÿреме тухса каять (1925 ç.). Çук, вăл любитель пек каймасть, совет поэзин поэтла посолĕ пулса каять. Совет Союзĕн чаплă гражданинĕ Вл. Маяковский Европăра (Франципе Германире) тата Америкăра совет идейисене сарать, совет литератури çинчен лекцисем вулать, хăйĕн сăввисемпе маршĕсене калать. Рабочисен представителĕсем пирĕн поэта хаваслăн йышăнаççĕ, сăввисене

куçарса сăнне пичетлеççĕ, çав вахăтрах буржуйсем поэтăн тăвăл шăрши кĕрекен сăввисенчен сăмсисене цилиндр ăшне персе чикеççĕ, хамăр çĕршыва ку большевика мĕншĕн кĕртрĕмĕр-ши тесе, министерствăсенчен ку поэта часрах, ăçтан килнĕ çавăнтах, ăсатас тесе, йăлăнаççĕ.

Поэтăн чикĕ леш енче çырнă сăввисем пусмăр айĕнчи пролетарисем çинчен çырни пулнă.

Акă „Блек энд уайт" (Шуррипе хури) ятлă сăвă. Гаваннăра пурĕ те закон тăрăх пырать: шур этемсен—долларсем пур, хурисен (негрсен)—çук, çавăнпа та Вилли килкарти шăлса пурăнать. Унăн айван пуçĕ нимĕн те шухăшла пĕлмест, пĕлсен те çакна çеç пĕлет:

Шурри
   пиçнĕ ананас çиет,
хури—
   тирĕк шывне шўтернине.
Шурă ĕçе
   шурри ĕçлет,
хура ĕç—
   хурине.

Анчах та мĕншĕн-ха шурă-шурă сахăра хури тумалла? Хура сигара шуррине мар, хурине килĕшерех паратьǃ Кун пек ыйтусемпе

сахăр королĕпе ан калаç, Вилли кун хыççăн шăлĕсене те аран пухса пĕтерет. Аçтан пĕлтĕр вăл, вĕт пулăшу ыйтуне Мускавран, Комминтернран ыйтмалла!

Акă „Парижанка" (Ку сăвва поэт 29-мĕш çулта юлашки хут Парижа кайса килнĕ хыççăн çырнă). Ĕç парижанки ахах мăйçаккилле, мерчен куç сулăллă, ылттăн çĕрĕллĕ мар иккен! Вăл сарра кайнă, вăл чахоткăпа та чирлĕ иккен! Сутăнсан—пĕр майлă, сутăнмасан ытла та йывăр иккен хĕрарăма Парижра!

Маяковский Европăпа Америкăн çӳллĕ техники умĕнче çĕлĕкне хывать. Акă Бруклински кĕпер, унăн чапĕ ĕмĕрсенче çĕтес çук, анчах унăн пĕлĕтсене кайса перĕннĕ чугун карлăкĕсем çинчен ĕççĕр тăрса юлнă мĕскĕнсем тĕпсĕр Гудзона сикеççĕ.

Ютçĕршывсенче лăпкă мар. Унта кĕрешӳ пырать. Çĕнтерӳ кунĕсем унта та час çитмелле. Çакăн пек туйăм юлать поэтăн ютçĕршывсем çинчен хунă сăввисенчен.

Инçетри çĕрсенче çӳренĕ чух аслă патриот Маяковский тăван çĕрĕ çинчен нихăçан та манман, унăн шухăшĕсемпе пурăннă, тăван килĕшĕн—Совет Союзĕшĕн—çав тĕрлĕ тунсăхланă. Хаяр кунсенче çĕршывпа пĕрлех савăнăç та, терт те курнă çĕршыва манма пултаратăн-и? Çук, пултараймастăн!

Аслă Октябрь революцийĕ 10 çул тултарнă тĕле Маяковский тепĕр пысăк парне хатĕрлет—„Лайăх“ ятлă поэма çырать. Гражданран вăрçинчен пуçласа çĕршыв çĕнтерĕвĕсен итогне илемлĕ литературăра кăтартать. Мĕн чухлĕ хавасрăх, çĕкленӳлĕх ку поэмăра!

Çак вăхăтсенчех поэт тăван çĕршыв хулисем тăрăх тухса çӳрет (пурĕ 56 хулана çитнĕ вăл), вечерсем ирттерет, культурăпа литература çинчен лекцисем вулать, ютçĕршывсенче çӳренисемпе курнисем çинчен каласа парать, вулакансемпе куçа-куçăн калаçать. Поэтшăн пехиллĕ ĕç!

Маяковский кабинетра ларса çырманпа пĕрех. Чылай сăввисене вăл трамвай çинче, чугункăсемпе автобузсем çинче е тӳрех урамра çырнă. Çапла çул çӳренĕ вăхăтрах вăл тăван çĕршыва юратни çинчен хăйĕн вилĕмсĕр япалисене çырать: („Совет паспорчĕ çинчен“, „Нетте юлташа—парохода—этеме“, „Сергей Есенина“, „Юбилей сăвви“ т. ыт. те).

Пурнăçри кив йăласемпе кĕрешсе „Хăнкăла“ „Мунча“ ятлă пьесăсем çырать, хаçатра ĕçлессине хăйĕн кулленхи ĕçĕн тĕп задачи вырăнне хурать, чăн нумай „Комсомольская Правда“ хаçатра ĕçлесе çĕршыва сыхласси çинчен, вичкĕн пуласси çинчен, тĕрлĕ тăшмансене çăпан пӳрĕ пек пăчăртаса кăларса

кăкласси çинчен татах та астутарать, вĕрентет, чĕнет. Оборона теми поэтăн творчествинче чи пысăк вырăн йышăнса тăрать. Мĕнле пархатарлă ĕç! Тăван çĕршыва усă кӳресси, коммунизм уттине хăвăртлатасси поэта нихăçан та хăварман. Вăл ăна хавхалантарнă, çунатланă.

Сталинла пĕрремĕш пятилетка поэтăн шухăшĕпе кăмăлĕсене тата çӳлерех хăпартать, анлăлатать. Поэт Сталинла пятилетка çинчен пысăк поэма çырма шухăш тытать, план тăвать, поэмăн пуçламăшне (вступленине) çырать.

Эпир Пушкинăн „Памятник“ ятлă итоглă сăввине пĕлетпĕр, Маяковскин те „Пĕтĕм сасăпа“ ятлă сăвви поэтăн пĕтĕм творчествине пĕтĕçтерекен сăвăллă палăкĕ пулса тăрать.

Маяковский хăйĕн япалисене çырнă чух паяншăн мар, ыраншăн çыратăп, тесе шухăшламан, вăл паянхи кунпа пурăннă, паянхи куншăн кĕрешнĕ, апла пулсан çак положенисем пĕтĕмпех ыраншăн пурăннине, ыраншăн—коммунизмшăн кĕрешнине пĕлтерĕççĕ те ĕнтĕ! Çавăнпа та вăл хăйĕн çивĕч хăйранă хаяр хĕçпăшалĕ—поэмисемпе сăввисем—тĕрлĕ правительсемпе поэтла йĕк-сĕксен ушкăнне таптаса, вĕсен пуçĕсем урлă ĕмĕрсене çитессе шанать, мĕншĕн тесен вăл—Маяков-

ский—паянхи кунăн ассенизаторĕ, шыв турт-таракан̆ĕ, паянхи куна кирĕкĕсенчен, кĕви-сенчен тасатаканĕ пулнă.

Хĕвеланăçĕнчи писательсем романсем çыр-са виллăсем тутарнă, миллионерсем те пул-каланă. Совет поэчĕн качестви урăх, вăл хă-йĕн сăввисем урлă пуясшăн тăрăшмасть, ун-шăн çĕршыв интересĕсем пахарах, халăх пурлăхĕ унăн пурлăхĕ, çавăнпа та вăл нумай пăтлă бронза палăк çине сурать, ан тив со-вет çыннисемшĕн пуриншĕн те кĕрешӳсенче çĕнтерсе илнĕ социализм хĕвеллĕ палăк пул-тăр!

„Пĕтĕм сасăпа“ сăвăн тĕп шăнăрĕ çакăн пек.

Мĕн пек пулĕччĕ-ши поэтăн поэми?! Мĕн пек социализмла шедеврсем панă пулĕччĕ-ши паянхи куна?! Анчах та 1930 çулхи апре-лĕн 14-мĕшĕнче поэтăн вĕресе тăракан кун-çулне ăнсăртран килсе тухнă вилĕм, совет çыннине пĕртте килмен килĕшӳсĕр вилĕм татрĕ. Совет литературин куççулĕпе йĕрсе макăрчĕ, тăшмансем вăрттăн та, уççăн та, шăлĕсене хăйраса, савăнчĕç.

Маяковский хăй çине хăй мĕншĕн алă йăт-ни халĕ ĕнтĕ пирĕншĕн паллă. Совет поэзин трибунне, агитаторне, аслати пек кĕрлекен сасăллă поэтне литературăри троцкистла-бу-харинла ирсĕрсем—авербаховецсем—вилĕм шăтăкне вăхăтсăр кĕмелле турĕç. Вĕсем ун-

тан мăшкăланă, кулнă, „Маяковский, эсĕ халĕ те перĕнсе вилмен-и“ тесе тӳремĕн намăса пĕлмесĕр ыйтнă, „Лайăх“ поэму начар тенĕ, ун патне йĕрĕнчĕк конвертсем ăшне хура тупăксем туса янă, сана—вакбуржуаллă поэта халăх ăнланмасть, йышăнмасть, юратмасть тесе йĕкĕлтенĕ, тата çитменнине пичет урлă та поэтăн авторитетне ӳкерме, варлама тăрăшнă.

Маяковский, хăйĕн пĕтĕм творчествине халăх йышăннине, ырланине, юратнине практикăрах пĕлсе тăрса, килĕшӳсĕр вилĕмпе вилет.

Халăх тăшманĕсем Маяковскине кăна мар, каярахпа, 1936 çулхи июнĕн 18-мĕшĕнче пролетари литературин никĕсне хывакана, совет литературине тĕнче курман пусăм çине хăпартакана, пĕтĕм халăхăн тата Ленинпа Сталинăн тусне — А. М. Горькие те вĕлерчĕç.

Тăшмансен—ирсĕр çĕленсен пуçне совет сучĕн тӳрĕ те çивчĕ хĕçĕ яланлăхах касса татрĕ. Вĕсен халăх ылханлăхĕпе витĕннĕ хура масарĕсем çинче антра кăшманĕ çеç сулланса ӳсет.

Иртнĕ юлашки çулсенче те-ха хăшпĕр литераторсем Маяковскин творчествине ăнланман пек, ырламан пек пулса сӳпĕлтететчĕç. Сталин юлташ поэт творчестви çинчен хăйĕн татăклă сăмахне каларĕ: „Маяковский

пирĕн совет саманин чи лайăх та талантлисенчен талантлăрах поэчĕ пулнă, вăл халĕ те çав хисепрех юлать. Унăн ячĕпе произведенийĕсем çине хак памасăр пăхни—айăплă ĕç".

Çак сăмахсем хыççăн Маяковский пирки шав кăларма тăрăшакан карма-çăварсем шыв сыпнă пек пăкăланчĕç.

1938 çулта СССР Совнаркомĕ Маяковскин наследствине—пĕтĕм халăх пурлăхĕ—достоянийĕ пулса тăрать тесе тата революцире çуралнă тăвăллă юрăçăн творчествине массăсем хушшине тата та тачăрах çитерес шутпа кирлĕрен те кирлĕ мероприятисем туса ирттерме постановленисем йышăннă.

Çакăн пек хисепе пирĕн саманари чаплă поэт чăннипех те тивĕçлĕ пулчĕ.

Маяковский творчестви пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă поэзи çине кăна мар, вырăс совет поэзийĕ çине те кăна мар, хамăр çĕршыври пĕтĕм халăхсен поэзийĕ çине те пысăк влияни кӳрет.

Ивановпа Çеçпĕл хыççăн пырса, хальхи вăхăтри чăвашсен йышлă талантлă поэчĕсем Маяковский пултарулăхĕпе питĕ пысăк усă кураççĕ, унтан вĕренеççĕ, унăн япалисене тăван чĕлхе çине куçараççĕ.

Маяковский пĕтĕмпех çĕнĕ форма, çĕнĕ ритм, çĕнĕ рифмăсем тăвать. Маяковский тунă форма хыççăн çеç хăваласа кайсан, сыраканран нихăçан та поэт пулас çук, меншĕн

тесен ĕç формăра çеç мар—ăшчикре- содержанире.

Çак япалана пирĕн хăшпĕр поэтсем ăнланса илеймен. Хăйсен сассине—пурнăçпа çыхăннă поэзи урлă тупас вырăнне вĕсем кăшкăрашаççĕ те — рифмăлаççĕ çеç! Ку литература мар, макулатура çеç. Йăнăш çул. Теприсем поэзи музыкăра теççĕ, каяççĕ вара музыка хыççăн шакăртаттарса. Вĕсем цезурăна та, кăшт янăраман сăмаха та тиркеççĕ. Чăн поэт сăмаха тиркемест, лексикăри пур пуянлăхпа та усă курать.

Шухăша чакармасăр, формăн илемлĕхне ӳкермесĕр, илемлĕхĕн пур средствисемпе усă курса уçăмлă, пуриншĕн те ăнланулла чĕлхепе çырни паха!

Çĕнĕ япала çырасси, литература тăвасси кăмăл çĕкленнипе (вдохновенипе) кăна пулакан япала мар, вăл куллен кун тумалли ĕç. Çавăнпа та пирĕн поэтсем Маяковскин хăюллăхне, кашни событи пирки сасă парассине, çĕнĕ темăсем уçассине, патриотизмне, витерӳллĕ йыхравлă сассине, чĕлхене пуянлатса унпа усă курас майсене анлăлантарассине—çĕнĕ саманари çĕнĕ поэтăн чи паха ахахĕсене—чĕрере тытса хăйсен пултарулăхне тапса тăракан чĕрĕ сĕткен кĕртмелле.

Мĕн пек усăллă та пархатарлă ĕç!

*Стихван Шавлы.*

## ЛАЙӐХ

(ПОЭМА СЫПӐКӖ)

Эп
  ҫӗрчӑмӑрне
ҫавранса
    чут тухман—
пуранӑҫ та
      аван,
пуранма та
      аван.
Пирӗн патра—
      вӗрекен хуранра
татах та
      лайӑхрах.
Урам
    ҫӗленӗн
      явӑнать.
Кил-ҫурт
    ятташӑн капланать.
Урамӗ—
    манӑн.
Кил-ҫурчӗ—
      манӑн.

Магазин
    çумĕн
магазин
    ларать.
Чӳречисем çутă,
        тем-тем курăнать:
ĕçмийĕ,
    çимийĕ,
        эрехĕ,
    çырлийĕ.
Шăнасенчен—
        чĕнтĕр,—
ан сĕкĕнтĕр!
Лампăсем
    илемлĕ:
йăлл... çех çиçеççĕ.
„Хакĕ
    йӳнелнĕ"
  тесе кăтартаççĕ.
Тĕреклĕн,
    хăватлăн
кооперации
    ӳсет.
Пуян тупраллă,—
        вăл лайăх ĕçлет.
Пирĕн халĕ
    пĕр пус çухалмĕ.
Курап
    кĕнеке йĕркине—
Йăлтăрккан

курăнать хушаматăм.
Саваннатăп!
Вăл манăн
вăй-халăм
хутшăнать
Республика халне.
Çĕкленчĕ
тусан
шатра шынран.
Хам автомобилĕм,
хам тытнă рульне.
Хам çынăмсене çех илĕп—
депутатăмсене.
Хĕрлĕ çурта,—
заседани унта.
Ларăр,
ан тăманаланăр!
Авантарах,
ман
Моссоветра!
Револьверĕ—
сарă,
пит-куçĕ
хĕмлĕ курăнать:
милици
ман çарăм,
мана вăл сыхлать.
Хушать сылтăма
каййма,
апла та лайăх:

кайӑп
сылтӑма.
Тӳпе
пурҫӑнланчӗ,
хумханчӗ
ҫил майӑн.
Нихҫан та
пулманччӗ
ҫакӑн пек
лайӑх!
Пӗлӗте кисретсе
вӗҫеҫ летчиксем.
Вӗсем
ман харсӑрсем.
Тӑрап
хытнӑ пек эп,
калап таврана:
— Аванах лекӗ
хура ҫӑхана.
Куҫсене
хаҫат ҫине:
маттур—
Вена ӗҫҫарӗ!
пит аван
буржуя
чӗркуҫҫипе
хыҫран
тыттарӗ.
Ҫуи,
суд,

Зер
гут!
Пушар пырать,
хут
çунать.
Прокурорĕсем чĕтреç
пĕрмаях...
Пит те лайăх!
Хаçатсем шавлаççĕ
вăрçăпа хăратса.
Муклашка ларасшĕ
пырăра тăрăнса!
Юнаççĕ-им?
Юрĕ!
Куç умĕнчех ав
сатуррăн
полксем
иртеççĕ.
Барабансем—
кĕрлеç,
штыксем—
вут сирпĕтеç.
Сулăмĕ
сулмаклă,
утăмĕ
янравлă.
Чунăма
çĕклесе
пыраç
ман çарăмсем.

Си-
  рён
    тăш-
      ман—
ма-
  нăн
    тăш-
      ман.
Сĕкĕнеççĕ-им?
      Лайăх!
Кĕл пекех вĕçейĕç
      çăваях.
Пĕлĕте перĕнсе
      сывлаç
        ман хапрăксем.
Шавла машин,
      чăшшин,
        чăшшин...
Шавла эс ĕмĕрнех,
      хытăрах,—
хăмачă,
    пурçăн
    ытларах
ман комсомолкăмсенеi
Кĕшĕл
  кĕшлерĕ
    çил умран,
вăл вĕрчĕ
    çумри садран

ду-
хи-
пе-
ле.
Ла-
йăх,
еп-
ле!
Хула тулашĕнче—
ялсем,
ялсенче—
хресченсем.
Сухалсем—
кĕреçе.
Лараççĕ аттесем.
Кашниех пит чее.
Суха сухалаç,
сăвăсем çыркалаç.
Кашни кĕтесрех
ир иртенех
ĕç алăра.
Ĕçлеç,
пĕçереç
маншăн çăкăра.
Ĕнине
сăваç,
пулăсем
тытаç.
Ўсет
Республика маншăн.

Кур—
    паллаймăн!
Ытти çĕршывсем
        çĕр çуллă.
Карчăк пек вĕсем
        çитмĕл курпунлă.
Истори
    вĕсемшĕн—
        карма çăвар тупă.
Пурнăç
    вĕсемшĕн—
        виç аршăнлă тупăк.
Манăн
    çĕршывăм
Ӳсен ача çеç-ха.
Атя,
эсĕ,
  çиç-ха:
пултар,
    шухăшла,
        кăлар,
            шутла!
Савăнăç ыталарĕ.
Сире кăшт
парар мар-и?
Тата
    ăçта
        çак пурнăç пулайĕ?
Вăл тем тĕрлĕ лайăх,
        тĕлĕнӳллĕ лайăх!

Çĕр çула çитиччен
Ӳсĕпĕр çĕр çинче.
Çултан çул ӳсме пил,
Çĕн хаваслă çĕн Кил!
Мухтăр сăввăмăра,—
Мăлатук ĕмĕрне,
юрлăр савăк юрра—
çамрăклăх çĕршывне.

## СОВЕТ ПАСПОРЧӖ ҪИНЧЕН

Эп
бюрократизма
кашкăр пек
кышлăттăм.
Мандатсене
сума сумаççӗ.
Кай-и!—
тусан сапса
çӗрӗн тӗпнех
хутсен тӗрки...
Анчах кăна-и—...
Купесен,
каютăсен
вăрăм фрончӗпе,
куратăп,
тилӗ пек
чее чиновник
çемçешкен утать.
Паспортсене параççӗ,
эпӗ те
паратăп

хамăн
пурпур çиллĕ
паспорта.
Хăш паспорт çине
ăшшăн
пăхаççĕ,
хăш паспорт çине
хыт сурчăк сурасшăн.
Сăмахран:
ыталасах тытаççĕ
акăлчан паспортне
çилхеллĕ арасланĕшĕн.
Куçсемпе
пыл пек
пиччене шăтарса,
чунне
виçĕ хут кĕрсе
тухса,
илеççĕ,
шерпетлĕх панă пек
йăл... кулса,
Америк çыннин паспортне.
Поляксен
паспорчĕ çине
качака афиша çине
пăхнă пек пăхаççĕ,
поляксенни çине
слон евĕр сиввĕн
хаяр куçсене
чармаклаççĕ:

— Ăçтан-ха, вара,
ку пулать
географиллĕ
çĕнĕ япала?
Пуçĕсен
кучанĕсене те
çавăрмасăр,
нимĕнле
туйăмсем те
туймасăр
илеççĕ,
илеç куççене
мăч хупмасăр
Дани çыннин паспортне,
тата ыттисене —
тĕрлĕрен шведсене.
Труках
вут хыпнă пек
господин шарт сикет,
тутине
сăпса пăталанă пек
тытăнать пуçтарма.
Ку—
господин чиновник илет
манăн
хĕрлĕ питлĕ
паспортăма.
Илет ґвăл
бомба илнĕ пек,
тытать,

чĕрĕпе
тытнă пек,
тытать
икĕ питлĕ
бритва тытнă пек,
тытать
чашлатакан
20 сăнăллă
пĕр чалăш тăршшĕ
çĕлене
тытнă пек тытать.
Носильщик
шухăшлăн
куçне хĕстерчĕ,
хăть ахалех
йăтса пырĕ япалусене.
Жандарм
хăй куçне
сыщик енне
çиçтерчĕ,
сыщик—
жандарм çине.
Мĕнле хаваспа-ши
жандармсен касти—
йышĕ
хĕнейĕччĕ
пăталĕччĕ
мана:
аллăмра
мăлатуклă—

çурлаллă
Советлă
паспорт
шевле пек
çиçĕм пек
хĕмленсе тăнишĕн.
Эп
бюрократизма
кашкăр пек
кышлăттăм.
Мандатсене
сума сумаççĕ.
Кай-и!—
Тусан сапса
çĕрĕн тĕпнех
хутсен тĕрки...
Анчах кăна-и...
Эп кăларатăп
дубликатăн
шалпар шăлавар
кĕсъинчен.
Ун хакне çитес çук
„чаплă ылттăн" тенийĕ.
Вулăр,
тĕмсĕлĕр,
паллăр
унăн хĕрлĕ тĕсĕнчен—
Эп
Совет Союзĕн
гражданинĕ!

## НЕТТЕ ЮЛТАША—ПАРОХОДА—ЭТЕМЕ

Ахаль мар чĕтĕрерĕм.
    Тĕшмĕш мар ăш-варта.
Çулла пек пуланса
    хĕрсе кайнă порта
çаврăнса
    кĕрет те,
ларать
    юлташ „Теодор
        Нетте".
Урмăшмастăп.
    Эп
    паллатăп ăна.
Ун куçлăхĕсем—
    çăлăнуункисем.
— Аван-и, Нетте!
    Калама çук савăнап
        эсĕ
        чĕрришĕн,
            трубасенчен
        тĕтĕмпе сывланишĕн,

çеккĕлсен,
канатсен
пурнăçпе пурăннишĕн.
Кунтарах çывхар!
Ăшăх мар-и сана?
Батумран çитиччен
хыт вĕретрĕн пулас
ăш-чикне.
Астăватни, Нетте,
иртнĕ кун-çулна,
дипкупере
манпа сăйланнине?
Хыпаланмастăнччĕ
эс.
Харăлтататчĕç
ыйхă чăптисем.
Куçсене
сургуч пичечĕсем çине
чалăшшăн хĕссе
çĕр каçичченех супĕлтететтĕн
Ромма Якобсон çинчен,
Кулăшла,
тара ўкеттĕн
сăвăсем вĕренсе.
Çывăрса каяттăн ир енне.
Курок
туртса хунă
пўрнўн шăнăрне.
Пырса çеç лекĕр,—
вилессĕр килсен!

Шухăшланă-ши эп,—
çулталăк çех иртсен
Санпала—пароходпа
тĕл пулăп, тесе?
Хыçалта
тем пысăккăш уйăх.
Кервен те вара!
Йăваннă
шыва ик пая çурса
йăранлăн.
Ĕмĕрлĕхе пек
коридорти çапăçуран
герой йĕрне тăсан
çапçуттăн,
юнлăн.
Коммунизма
кĕнеке тăрăх
вăтамăн ĕненеççĕ.
„Кĕнекере
мĕскер çеç авăртмăттăн,
ахаль тăран!"
Ак çакăн пекки
кĕтмен çĕртенех
ĕмĕте умма кўрет-çке,
коммунизма
кăтартать-çке
шăмми-шакки,
ўпки-пĕверĕ таран.
Эпĕр
пурнатпăр

тупаларпа чамартанса.
Уншан —
хĕреслĕн касăр,
пульăсемпе вăшăлтаттарăр!
Ку —
çут тĕнчере Российăсемсĕр,
Латвисемсĕр
пурăнмашкăн савăнса,
этемлĕхĕн
пĕр тĕп кил-çурчĕ-йĕрĕпе пĕр пулса.
Пирĕн
шăнăрсенче шыв мар —
вĕри юн.
Эпĕр
пыратпăр
револьвер шартлатăвĕ витĕр çиçсе.
Ку —
çакăншăн:
вилсен те пулса тăма
пароходсем,
сăвă йĕркисем
тата вăрăма пыран ĕçсем.

* * *

Пурнасчĕ ман,
пурнасчĕ ман
çĕмĕренĕн
кунçул тăрăх вĕçсе.
Юлашкинчен
сунап хама —

ман урăх ĕмĕт çук —
ман вилĕм вăхăтне
кĕтсе
илес килет
юлташăм пек,
Нетте пек.

## ТĔП ПУЛТĂР

Киввин шăхличчисем
    вăрçа мухтанă,
суранлă ăш-чикне вĕсем —
сăвăсемпе ырланă.
Вилме те музыкпа
    ташша çапса кайнă.
Хитре хĕрсем хура куçпа
    гусарсене ăмсаннă.
Алла чечек тытнă,
    пит-куç йăлтăртатнă,
аршăн çăтнăн утнă,
    шпор шăнкăравланнă.
Вăрçа кĕнĕ пул та —
    çиç кăшт,
        çăрхала кăшт —
санăн кĕсъӳ тулнă та,
    пуян эс акăш-макăш.
Кăкăр тулли орден,
    хĕçе ылттăнлана,
эполечĕ,
    облаçĕ...
Эс генераллаһнă.
Лашу сан, —

урхамах та мар,
лашу сан,—
çавра çил.
Ларса пыран—
хăвах та мар,
хырăм—
арпа лаççи.
Мăйăх сан
мăйăх мар-им?
Мăйăх сан—
кĕлтесем!
Минтерлĕ
çут йĕнерĕ,
шур пурçăн
чĕлпĕрсем.
Е
пĕр ухмах пуля
сăхсан
сан
кăкăрна,—
мрамор
палăк
пулĕ
ĕмĕрлĕхе сана.
Хăш-хăш сăвăç
паян та-ха
тăкман
кивелнĕ йăптăха,—
тапан
чăхăм

кĕсре хурми
ташлать,
юрлать
хăйне курми:
„Хитре сынсем
хитре тумпа
вăрçа утаç
гитарăпа..."
Чăнах та хитре-шим?
Мерси сире уншăн —
Илемлĕ ĕçсемшĕн,
янравлă юрăшăн!
Сăвăçсен мухтавĕпе
капăрлатнă вăрçа-харçа,
çăвăç аркаттăр,
ятлатăр
лач! сурса.
Вăрçă —
кĕлĕмçĕсем тăвакан савăт, —
чиперлĕхне кур та
савăн!
Вăрçă —
виле шăршиллĕ
аскăн çил-тăвăл,
вăрçă —
уксах-чăлах купи,
вил тăвĕ.
Вăрçă —
пуянсемшĕн,
вăрçă —

мулçăсемшĕн;
пирĕншĕн —
тар,
чĕр юн,
пыйт-шăрка, —
туян уксаххи
костыле — патака.
Вăрçă —
хушу,
вăрçă —
манифест.
Резина урупа та
хĕрне юратăн эс! —
Мĕнпур çĕр çинчи,
юлташсем,
калăр:
„Вăрçă пулас çук!“ тесе.
Патшалăх пуçлăхĕсен йăвине,
тӳре-шарасен тĕркине
ирĕклĕхшĕн
çĕр çинчен
çапса салатас
вăхăт çитсессĕн
вут-кăварăн,
тĕнче пролетарийĕ, —
ĕмĕрсем витĕр куракан,
чăнлăха калакан, —
вĕсене çĕннипе кăна çеç
эс
ан чарăн!

## СЫВПУЛЛАШНИ

Авто ҫинче
юлашки франка
вакласа:
— Хăш сехетре
Марселе? —
Париж
чупать
мана
ăсатса
пĕтĕм
калама ҫук
илемпе ҫиҫҫе.
Уйрăлусен
лĕп шывĕ
ан
куҫран,
хускат
чĕремҫĕме
чеченлĕхпе
тулса!
Эп

пурăнăттăм,
эп
вилĕттĕм
Парижра:
ытарайми çĕр,
ытарайми хула —
Мускав —
пулмасан.

## ВУНĂ ÇУЛ ЮРРИ

Йĕк-сĕк адмиралсем,
тип барон,
выç пан
пирĕн çĕре
килчĕç
вунулт çĕршывран.
Тупă —
французăн,
танк —
акăлчанăн.
Шур бандăн
тĕп ашшĕ—
пулнă Антанта.
Çапăçрĕ
пирĕн
çамрăк çĕршыв,
шурĕ
уй-хирĕн
граната шăрши.
Эпĕр
разбойшăн
тухман фронта,
эпĕр
сыхлатпăр

хире,
    завода.
Ял ҫынӗ те утнӑ,
Шахтерӗ те тухнӑ,
выҫҫӑн
    кӗрешнӗ,
пыйтӑ,
    кышланӑ.
Шлем ҫинче ҫиҫнӗ
Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр.
Эпӗр
    хурах шайккине
кӑшкӑрнӑ:
        тӑр!
Пӗтрӗ
    Деникин,
пӗтрӗ
    Махно.
Пӗтӗ ытти —
шур банда йытти.
Хуҫалчӗ Крымӑн
ҫурӑм шӑмми —
Хӗрлӗ вӑй
        ҫапрӗ
шур ҫар чӑтайми.
Ҫӗнме чӗнсе тапнӑ
нихҫан уйрӑлмийӗн
рабочий
        чӗрийӗ,
хресченӗн

чĕрийĕ.
Пулчĕ
хăрушлăх —
тăчĕ
пур халăх.
Çут тĕнче курчĕ
ниме парăнманлăх.
Çĕнĕ поход
тапрансассăн —
çĕр чĕтретсе
утăçĕ харсăрăн,
харăссăн
Хĕрлĕ дивизи —
çарсем.!
Прожектор пек
çул сарĕ
присяга —
тупа.
Буденныйсен ут çарĕ
пырĕ юртăпа.
Харам пыр буржуйăн
блокадине хирĕç
самолетсем хăрушшăн
тўпелĕхе йышăнĕç.
Ус эс хăватлăн,
тăр эс мухтавлăн,
ĕмĕр ан парăн
большевиксен
Хĕрлĕ
Çарĕ.

## КИЛЕЛЛЕ

Хăвăр майăн, шухăшсем, куçăр.
Чунпа тинĕс тарнĕш,
  ыталан.
Кам ялан
  тăп-тăрă та яр-уçă,
Ман шутпа, вăл
  тăмсаккай, айван.
  Пур каютăсенчен
  эп чи япăххинче,
Çĕрĕпех урасем
  тĕвеç пуçăм çинче.
Маччан канăçне
  çĕр хута ашнăçемĕн
вăркăнать пĕр ташă,
  йынăшать пĕр çемĕ:
„Маркита, Маркита,
Маркита чунăм,
Мĕскершĕн, Маркита,
Савмастăн мана...“
Мĕншĕн-ха мана
  Маркитăн савмалла-ши?:
Манăн халь
  франксем те çук-çке алăра.

А Маркитăна
(куç хĕсĕр çеç)
çĕр франкшăн
Асатаç кабинета
хăпăл-хапăлах.
Пысăк мар укçа вăл—
пурăн та шик шăхăр,—
Çук,
интеллигент,
эс пылчăк çавăрса,
Сăва пурçăнне
ун ярăм йĕрĕ тăрăх
Çĕлекен машинкăна та
парăн çав хĕре
часах.
Пролетарисем
коммунизма
шахтăсен,
çурласен,
сенĕксен
никĕсĕнчен
тытаççĕ çул.
Эп унта
поэзи тӳпинчен
пыратăп кĕрлесе,
Ма тесессĕн,
унсăр манăн
юрату та çук.
Пурпĕрех—
хам кайнă-и эп

е кам хăвалана—
тутăхать сăмах хурçи,
хуралать ман хулăм пăхăр бас.
Мĕншĕн-ха
ют çумăр айĕнче
халь манăн
Йĕпенес,
çĕрес те
тутăхас?
Çитмĕл-çич шыв урлă кайнăскер,
выртатăп
хускатса
машинăма
аран-аран,
Эп хама
телей шăратакан
Совет завочĕ пек
туятăп.
Çук,
мана
ĕшнерен,
ку чечек пек тесе,
Служба хыççăн
никам та ан таттăр.
Ман Госпланăм мана,
тавлашса та
хĕрсе,
Ĕç—задани
çулталăклăх патăр.
Ĕмĕрсен комиссарĕ

ман шухăшсене
Кĕрттĕр хăйĕн
приказĕсене.
Чи пысăк ăстаçă
ставкипе пĕрех
пуян юрату туянтăр чĕре
Ĕç хыççăн,
завком,
канăç пар,
Питĕр ман тутана
çăрапа.
Штыкпа танлаштарччăр—
тетĕп эп—
перона,
Чугунпа,
шăранан хурçăпа
пĕр халлĕн
Сăвă ĕçĕ çинчен Политбюрора
докладсем тутăр
Сталин.
„Çапла ĕнтĕ вăл...
çĕр пўртрен эпир тухнă та
акă
Çĕкленнĕ
çўле—
тўрех.
Тăван Союзра
сăвăсен чысĕ-хакĕ
Вăрçăчченхи шайран
çўлерех...“

## ХУСАН

Ларӑть
  кукӑрӑлса
ватӑ
  Хусан.
Шавлать
  тахӑш
  „Акӑш...
    макӑш...“
Хӑйсемле
  мӑкӑртатса,
Юра пылчӑкпа
  варласа
ҫенӗх умӗнче
  ҫынсем
шыраҫҫӗ номерсем.
Ҫанӑ ӑшне
  ӳсӗрсе,
кӗчӗ пӗри
  именсе,
куҫӗ ялкӑшать.
Саламлап юлташа.
Эп
чӗлхесем енӗпе

ăстах мар:
те норвегла,
те шведла...
Кĕçĕ тутар:
„Эп
тутарла
сулахай марша
парам вуласа".
Иккĕмĕш кĕçĕ...
каларĕ,
кĕсъине ал ярса:
„Эп—
мариец.
Сан—
сулахая,
кўр-ха,
марилле
парам каласа".
Тухрĕç вĕсем...
Çав самантрах
хĕсĕк,
лутра алăкран
виççĕмĕш кĕçĕ.
„Сирĕн
марш—
пирĕн
марш.
Эп—
чăваш,
илт,

кӑмӑллаш.
Сирӗн марш
çапла
янӑрать
чӑвашла...“
Эп çулсене
çӳçрен ярса тытрӑм пек—
— Тӑрӑр,
тусан
ан кӑларӑр-ха!—
Хам алӑмпа
хыпашлатӑп эп
„политика“ текен
сӑмаха.
Урал тӑвӗсем
хушшинче хӗсӗнсе,
хӗн-хур, нуша
тӳснӗ халӑхсем,
алӑка яр уçса,
çине-çинех
штурмлаççӗ
культура сӑртне.
Ларать
кукӑрӑлса
ватӑ
Хусан.
Шавлать
тахӑш
„Акӑш...
макӑш...“

## ÇУЛЛА ДАЧĂРА ВЛАДИМИР МАЯКОВСКИЙ КУРНĂ ТĔЛĔНМЕЛЛЕ МЫСКАРА

(Пушкино, Акулово тăвĕ, Румянцев дачи, Ярославль чугун çулĕ тăрăх 27 çухрăм).

Çунатчĕ анăç
çĕрхĕрĕх хĕвеллĕн,
çу кунĕ июле куçса пыратчĕ,
вĕриччĕ кун,
шăватчĕ шăрăх меллĕн—
ку ĕç пĕр дачăра пулсаччĕ.

Ак, Пушкино сăртне хĕссе
курпунланать Акулăн тăвĕ,
ту тĕпĕ—ял,
Çурт çиййĕсен
хуппийĕ айне пулнă вăл.
Ял хыçĕнче—
шăтăк—
васан,
çав шăтăка куллен
хĕвел анать иккен шуса

тӳп-тӳррĕн те хуллен.
Ыран татах ҫут тĕнчене
ейӳлеме кăварлăн
хĕвел тухать.
Ҫак ĕҫ ҫине
эп тарăхма пуҫларăм.
Ҫапла пĕрре эп ҫилленсе
хăратмаллах кĕрлерĕм:
„Эс ан-ха,
ҫитĕ ҫӳресе
вучах тăрăх,
хĕвелĕм".

Пĕлĕт айне—теп—харампыр,
ачаш вырнаҫнă эсĕ.
Кунта—ак лар, плакатсем ҫыр,
хĕлне, ҫуне пĕлмесĕр.
Эп кăшкăртăм хĕвелĕме:
„Итле-ха, ылттăн пуҫăм,
кĕресчĕ санăн чей ĕҫме,
тем ҫӳриччен пĕр уссăр".

Мĕн турăм эпĕ.
Пĕтрĕм эп.
Ман паталла, хăй ирĕккĕн,
хирпе
ҫап-ҫут урисемпе
хĕвел утать-ҫке ҫирĕппĕн.
Харанине ăшра хĕссе,

калла чакап чăлаххăн.
Акă садра ун куçĕсем,
садпа пырать вăл акă.
Пур кантăк,
алăк,
хушăкран
кĕрет хĕвелĕн çулăмĕ.
Вăл кĕчĕ,
сывлăш çавăрсан,
сăмах пуçларĕ хулăммăн:
„Тĕнче пуçланнăранпала
малтанхи хут эп антăм.
Эс чĕнтĕн, сăвăç,
хăнала.
Чей-сахăр пур-и, янтă-и?"!
Куççуль юхать,
чăтмалла мар,
вĕри,
ăсран та кайăн.
Ăна чĕнеп:—„Ак, самовар,
ларсам, çутатаканăм".

Мана шуйттанĕ хушрĕ-шим
чăрсăрланмашкăн,
эпĕ
кĕтсе ларап,
тем ытлашши
пулмасть-и—
шикленетĕп.
Анчах тĕлĕнмелле сĕткен

хĕвелĕмрен тапать ак,
чун уçăлнă май, ерипен,
Унпа эп калаçатăп.
Вăл-ку çинчен калатăп хам,
хышлать-çке—тетĕп—Роста.
Хĕвел калать: „Ан хуйхăр-ха,
ĕçе пăхма пĕл просто.
Мана, мĕскер эс,
çутатма
е çăмăл пек шутлатăн?
Пĕр тухнăскер—пур хăватпа
пыратăн, çутататăн!“.
Çапла сăмах тĕве-тĕве
çак каç кунпа ылмашрĕ.
Мĕн тĕттĕмĕ.
Эп хĕвелпе
пачах ĕнтĕ юлташлă.
Часах йăна,
хăйса çитсе
хулпуççирен çапсилтĕм,
Хĕвел кларĕ,
„Эс те эп
эпир, юлташăм, иккĕн.
Тухар, поэт,
вĕçер,
юрлар
тĕнче йăх-яхĕ тăрăх.
Эпĕ—хĕвел
сапам кăвар,
эс сăвă сапса тăрăн“.

Мĕлке хӳми,
каçсен тĕрми
ик хĕвелпе таптанчĕç,
Сăвăсемпе хĕвел шевли
мĕнпур енне саланчĕ!
Ырса минренĕн,
ыйхăллăн
выртасшăн каç аптранă пек.
Сасартăк эп пур вăйпала
çуталтăм—
кун янравлă!
Çутат ялан,
мĕнпур çĕрте,
çутат эс ĕмĕр-ĕмĕр,
çутат,
çутал та хĕпĕрте!—
Çапла
хĕвелпеле ман ĕмĕт.

# ЮБИЛЕЙ СĂВВИ

Александр Сергеевич, паллашнă пулар,—Маяковский.

Кӳрĕр аллăра!
Ак чĕрем.
Итлĕр,
тапмасть ĕнтĕ,
вăл сасăсăр макăрать.
Хурлантарать
çак йыт çӳри пек
лăп арăсланăм.
Эп
нихçан та пĕлменччĕ:
манăн
çăмăлттай пуçра
темиçе пин тонна иккен
ăсхакăлăм.
Йăтса пырап сире.
Паллах, тĕлĕнĕр?
Хĕстертĕм пуль?
Ыратрĕ пуль?
Ыйтап, тăванçăм, каçарма.
Манăн

тата Сирĕн
управлăхра вĕт ĕмĕр.
Мĕне тăрать пире
сехет
е иккĕ
çухатма?
Шыв юхать пек—
вĕçер-ха
пĕр супĕлтетсе.
Çурхи çанталăк тăрать пек—
илемлĕн те
патварлăн!
Пĕлĕтре, ав, уйăх
калама çук çамрăк,
пĕчченлесе
вăйя кăларма та
хатарлă.
Эпĕ
халь
юратупа
плакатсенчен
пушаннă.
Кӳлешĕвĕм
урайри
упа тирĕ пек йăваш.
Çĕр—
çăмха пек иккенне
ăнланăн—
купарчусем çине лар та,
ваш!

Çук,
килменлĕхсемпе çыхланмăп,
унтан
калаçассăм та килмест никампала.
Рифма сухисем çеç
тапаççĕ васкавлăн
пирĕн пеккисен
хĕртен шăрăхпала.
Тĕлĕк—ултав.
Тĕлленўсем те
уссăр курăнĕç,
куллен кунхи ĕçе
туса
пырас
пулать.
Анчах пулать хăш чух—
хăйĕн тепĕр енне
кăтартать
çак пурăнăç,
пысăккине
пĕчĕкки
ăнлантарать.
Эпĕр
лирика
штыкпа
илмен те мар алла.
Шыратпăр
çивчĕ те сулмак сăмахсене.
Анчах поэзи
чăрсăр япала:

пурнать хăйне,
чикмест те хăлхине.
Сăмахран:
Библи этемĕ
Навуходоносор
аташнă пек
симĕс питлĕ,
сар мăйăхлă,
нумай сăмах
калаçу-и вăл,
е сурăхла мек-мек:
„КООПСАХ".*
Пĕлеп авалăн йăлине,
парсамăр стакансем!
Хуйхăсене
эрехпеле пусарнă.
Анчах,
пăхăр-ха,
Red тата White Star-сем**
тĕрлĕ визăпа ишсе хăпарнă.
Сирĕнпе
мана лайăх,
чунăм хавасланчĕ.
Муза
чиперрĕн туртать
чĕлхĕр вĕçĕнчен.
Мĕнлеччĕ-ха.

*) Сахăр промышленнăçĕн кооперативĕ.
**) Америкăри пароход обществи.

çав Ольга калаçатчĕ?
Çук.
Ольга мар!
Онегин
Татьяна патне
ăсатнă çырăвĕнче?
Çырать:
— Вăл,
сирĕн упăшкăр,
ухмах,
кастарнă ват ут.
Савап Сире.
Пулсамăр
чăнласах та ман.
Ак эп ирех
шанса тăратăп,
сирĕнпеле
кăнтăрлапа
курăнаçма.—
Пурте пулнă:
чӳрече панче тăни,
çырусем,
сывланă та пуль ах!..
Анчах,
хуйхăрма та пултарайманни—
вăл,
Александр Сергеевич,
нумай йывăртарах.
Атя, Маяковский!
Ут кăнтăра!

Рифмăсемпе
   чĕрӳне çунтар эс
      çĕрĕн-кунĕн.
Ак,
   юрату та йăлмак пăявра,
чун пек Владим Владимĕ.
Çук,
   ун ячĕ
      ватăлăх
         марах.
Пӳне
   мала çеç ывăтар—
эп ик çынпа
      чипер кăна пултарăп,
Çилентерсен—
      виç çын та
         ним те мар.
Калаççĕ:
   вăл темипе
      ин-ди-ви-ду-ал-лă...
Entr nous*...
   цензор варласран.
Сире калам-ха,
      элек сараççĕ:
—вĕт куртăмăр пит паллăн,
         ВЦИК"ăн
            икĕ
               членĕ

* Хамăр хушшăмăрта пултăр.

хĕрсемпе пыратчĕç.—
Ак тамашă,
суя сăмах салатрĕç.
Чунтан киленеççĕ.
Александр Сергеевич,
ан итлĕр вĕсене!
Тен
чăнласах пĕчченçĕм
эп çеç
хĕрхенетĕп
Эсир
паян
чĕр маррине.
Ман
сирĕнпе
хам чĕрĕ чух
сăмах татасчĕ-ха
ăш варлăн.
Ак часах
эп те вилĕп,
хытăп чунпала.
Вилсессĕн вĕт
тăма тивет
чут çеç мар юнашарăн:
Эсир
Пă-пала,
а эпĕ,
Мă-пала
Кам
хушшăмăрта?

Кам умӗнче ҫӗлӗк хуҫас ман?
Ҫӗршывăмăн
поэчӗсем ытла сахал-ҫке.
Ак, мăшкăл,
хушшăмăра
сӗкӗннӗ Надсон,
ыйтар,
лартчӗр ăна
алфавит вӗҫне!
Ак Некрасов
Коля,
ҫӗре кӗнӗ Алюш ывăлӗ,
самаях—
картла та вăл,
сăвва та пултарать,
сăнран та сарăпсăр.
Пӗлетӗр-и ăна?
Ак вăл—
ачи вăл лайăх,
пире компани вăл,
ан тив тăтăр.
. . . . . . . . . .
Ну, Есенин,
мужикленекенсен ассийӗ.
Кулу!
Перческепе,
ҫӳрет вăл каҫтаканăн.
Пӗрре итлетӗн те...
вӗт ку хортан илнийӗ!
Тăмра калаканӗ!

Поэт
пурнăçра та
вăл пултăр ăстаç,
пултаракан!
Эпир
çирĕп
Полтав эреххин штофĕ пек.
Ку—капла.
Безыменский мĕнле?
Пырать...
аван...
Шур кишĕртен тунă кофе пек.
Чăнах та,
пирĕн пур
Асеев Микулай.
Вăл пултарать.
Хăтланчĕшĕ те ман.
Анчах çимелĕх те пулин вĕт
тупмалла,
пĕчĕк пулин те
çемье-çке,
тăрантан.
Сире,
чĕрĕ пулсан,
ЛЕФ-ра
эп соредактор тумалла.
Агиткăсем те
шанса
парăттăмччĕ эп.
Пĕрре кăтартăттăм та:

— Ку—çапла,
ку ак çапла...
Эсир пултарăттăр,
сăввăр чуппи те Сирĕн
шыв юхăмĕ пек.
Сăрпа
сукно та тупăттăм,
ГУМ пикисене те
парăттăм
рекламăшăн.
(Сире ямб виçипе
сас уçăттăм,
тăрна куç пек кăмăлăршăн).
Тытăнчăклă ямба
Сире халь тивĕççĕ манма.
Пирĕн перо халь—
штык,
сăнă пĕрех.
Революци вăрçисем
„Полтавăпа" тан мар,
саву та халь
Онегин савнинчен
вăйлă та çӳлерех.
Хăрăр пушкинçăсенчен!
Йӳтенĕ Плюшкин
сĕкĕнесшĕн
тутăхнă перопала:
— Ха, курăр,
халь ЛЕФ-ăн та
пур Пушкин.

Ак, арап!
тата
тавлашать
Державинпала...
Эп юратап Сире.
Анчах çӗрнӗ шӑм-шаккӑра мар,
чӗрлӗхӗре кунçул!
Сире халь
пӗр хисепсӗр
хрестоматиленӗ,
Ман шухӑшӑмпа,
чӗр чух
эсӗр те хыт шавланӑ пуль:
Вӗт эсӗр
Африка этемӗ!
Çӗртӗп çӑтман Дантес!
Патша кил-йыш путсӗрӗнчен
ыйтаттӑмӑр:
— Таврашӑрсем камсем пулса?..
Мӗн тунӑ-ха
17-мӗш çулччен?
Курас кӑначчӗ
çав Дантеса.
Ытах
мӗскер пекӗлтетни,
хӑй юмӑç пӑхнӑ евӗр?
Мӗнле калас,
çӳл чыс чурийӗ
тӑхланран ӳксе...
Вӗсем

тĕрлĕ-мерлисем,
паян та-ха хисепсĕр
пирĕн
арăмсем
патне
чупам сунарçăсем.
Аван!
Совет çĕршывĕнчех!
пирĕн патрах!
Ялт пĕр ушкăнăн:
ĕçхĕл,
кунçул.
Анчах—
шелтерех—
поэтсем çукрах,
ытах,
тен,
вĕсен
кирли те çавăн чуль?
Ĕнтĕ—вăхăт.
Ав, шурăмпуçĕ те çĕкленнĕ.
Милиционер
ан тытăнтăрччĕ шырама поэтсене.
Кунта,
Тверь бульварĕнче
вĕсем пире питрех иленнĕ,
ну, лартам,
пьедесталăр çине.
Чинран пăхсан—
чĕрĕ чухнех

мана
палăк
тивĕçлĕ пек туятăп.
Динамит эп хурăттăм та
калăттăм:
ватап!
Пур вилене те
эпĕ
кураймастăп!
Пур чĕрчуна та
эпĕ
ыталап!

## СЕРГЕЙ ЕСЕНИНА

Хай, авал каланă пек,
  эсĕр куçрăр
    урăх тĕнчене.
Пушăлăх...
  Вĕçетĕр
    çăлтăрсене
      касса кĕрсе.
Аванс та çук,
  хупах та çук.
    Урăлăх.
Çук, Есенин,
  ĕхĕлтетни мар ку,—
пырта
  кумккаланнă хурлăх
    сурать çăпанăн.
Куратăп—
  чĕр юнлă аллупа
    мĕшĕлтетмен те мар ху,
çапах,

шăм-шакă мишукне
суллатăн.
—Чарăнăр,
пăрахăр!
Ăсăр ăçтаччĕ?
Епле çĕклерĕн
аллуна
ху çине?
Вĕт эсĕр
темскер тума та
пултараттăрччĕ,
пултараттăрччĕ
тепри пултарманнине.
Мĕншĕн?
Мĕскершĕн?
Иккĕленӳ ыталарĕ,
Критиксем мăкăртатаççĕ:
„Куншăн айăплă
çав та леш,
чăннипе—
тату çук мар-и,
çампа вара
сăра,
эрех лĕркке,
ĕрлеш..."
Богема
сире
класпа
улăшма сĕнеççĕ мĕн.

Куçкĕретĕн
класс сыхлĕччĕ
тĕркĕшӳччен-и пулĕччĕ,—
çыр та лар!
Пĕр каласан,
класс
ăш çуннине
кваспа лăплантарать-им,
класс,
сыпас енчен,
вăл хăй те ухмах мар.
Сирĕн çумма
напостовца
лартма хушаççĕ мĕн,—
пулăттăр
ăшчик енчен тулли те
тăрă.
Кашни кунах
çĕршер йĕрке те çырăттăр
Доронин пек
кичем те
вăрăм.
Ман шухăшпа,
çак тĕллевӳ
ĕçе кĕрес
пулсан,
çĕçĕ çиçейĕччĕ
хăйсен аллисенчех.
Луччă та

эрех кӳпсе вилес,
кичемлӗх пусиччен.
Ҫак вилӗм сӑлтавне
тупса
карандаш ҫӗҫҫи те,
пӑяв та халь парайме.
Ӑҫтан пӗлен,
„Англетерире"
чернил та
пулнӑ та пулсан,
шӑнӑрсене ҫурма тӑни те
кирлӗ мар мӗн.
Подражательсем
ҫухӑрчӗҫ: бис!

Ӗнерччӗ,
хӑйне хӑй взвод
кӑшт ҫеҫ калатчӗ:
тӗпленер!

Вара мӗншӗн
ҫынсем
хӑйсене хӑйсем
вӗлерччӗр,
луччӑ
чернил тӑвас ӗҫе ӳстер!
Яланлӑхах ӗнтӗ
ҫӗре кӗтӗн.
Йывӑр.
Ваклассӑм та килмест.
Чӗлхем чулланчӗ.

Халăхăн,
халăхăн-чĕлхеçĕн
янравлă юрăçи,
чи аскăн юрăçи çухалчĕ.
Тăпру çăмăл пултăр тесе
сăвăсем шăратрĕç.
Пĕр намăс çук—
вĕсем йăлт аваллаччĕ.
Пĕчĕк сăрт çине
мука рифмăсем
шалçаларĕç,—
çапла-ши сăвăçпа
сывпуллашмаллаччĕ?
Сире асăнса-ха
палăк та шăратман.
Ăçта вăл,
бронза янравĕ
е вутчулĕн вучĕ?
Анчах тăпрăр çине
пĕтĕм ăнман
асăну пеккин
çӳп-çапне халь хучĕç.
Сирĕн ятăр
шур тутăрсенче
манкаланнă,
сирĕн сăмахăра юлхавлăн
Собинов сĕлекелентерет,
Хăрăк хурăн умĕнче:
ĕнĕрлет:

„Сăмахăм çук, тăванăм,
сывпул, çут тĕнче“.
Эх,
урăхлаччĕ,
çав
Леонид Лоэнгриныччпа
ман
калаçасчĕ!
Кĕрлевлĕ харкашан пек
пырса тăрасчĕ:
— Сăввăма
чўпеклеймĕр,
пăру пек кавлесе!
Виç пўрне витĕр çеç шăхăрса
сире хăлхасăрлатасчĕ,
çĕр çăтса,
мур хирсе
кукленесшĕсем!
Сирпĕнччĕрччĕ
тăмпуç-çаттанчăксем турпасăн,
шăхăран çилпе
пиншакĕсене тустарса;
сапнă пăрça пек
ыткăнтăрччĕ Коган,
тĕл пулнисене
мăйăхĕпе амантса.
Йĕк-сĕк
сахал-ха сайраланчĕ.
Ĕçсем нумай—
ĕлкĕр кăна!

Малтан—
пурнăçа юсасчĕ,
аванлатсан—
ырла ăна!
Ку вăхăт—
перошăн йывăртарах.
Анчах,
кала уксах-чăлах,
пире,
ăçта,
хăçан,
хăш аслă çын суйланă-ши вара
такăртарах
çăмăлрах
çул-йĕре?
Сăмах
этем вăй-халĕшĕн—
çулпуçĕ.
Ут!—
вăхăт хыçра йĕтре пек
шартлаттăр.
Çилпеле
çӳç-пуçу
арпашни çеç
аваллăха
ăсантăр.
Кулу-тăрушăн
çĕр чăмăркки
сипленментерех-ха пăртак.

Савӑнӑҫлӑха
  малаш
    кунӗсенчен
      тӑпӑлтар!
Ҫак пурнӑҫра
  вилес тени вӑл
    ҫӗнӗ мар,
анчах
  пурнӑҫ тӑвасси
    нумай
      йывӑртарах.

## ПАРИЖАНКА

Эсĕр
Париж хĕрарăмĕсем
мерченлĕ пуль,
ахахлă пуль
тесе ăнланатăр.
Пурнăç—
усалрах.
Пăрахăр
тĕлленме,—
йăнăшатăр!
Ман
парижанкан
сăн-пичĕ урăхла.
Чăн каласан,
вăл çамрăк-и,
ватă-и,—
такам пĕлет.
Вăл, —
якатса çутатнă
çĕр саплăклă
тумтирлĕскер,
ресторан уборнăйĕнче ĕçлет,

Пӗр пӗчӗк ресторанта—
Гранд-Шомьерте.
Бургундскине ӗҫнисен
кӑмӑл пулать:
хырӑма
пушатасси,
тухса
уҫӑласси.
Мадмуазелӗн
ӗҫӗ
алшӑлли парасси,
Ку ӗҫе вӑл
артистла пултарать.
Куҫкӗски умӗнче
пит ҫинчи пукрана-и
тӑратӑн пӑхса,
вӑл,
куштӑрканӑ пит-куҫпа
йӑл кулса,
пудрӑпа пудрӑлать,
духипе сирпӗтет,
пипифакс та парать,
кӳлӗнчӗке те шӑлать.
Клазет шахтинче
суткипе
хӑнтӑлаланса,
тӗпсӗр хырӑмсен чурийӗ
ҫутӑ кун кураймасть.
Аллӑ сантим!
червонец хакӗпе,

арçынтан
тăвата пуса
ун ĕçĕ ларать.
Умывальник умĕнче
тăрап алла çуса.
Парфюмери имĕсен
сăмса çуракан шăршине
шăршласа,
мадмуазеле
ăнланмашкăн
мадмуазельтен
ыйтасшăн:
— Мадмуазель,
каçарăр,
мĕскĕн курăнатăр.
Уборнăйпе
яшлăха улăшма
шел мар-им?
каларăр!
Е
парижанкăсем çинчен
эп илтнĕ суя хыпар,
е, мадмуазель,
эсĕр парижанка мар.
Сăнран
сар çапнă,
чахоткăлăн курăнатăр.
Çăм чăлхапа...
Мĕншĕн пурçăн тăхăнмастăр?!
Шампа-хырăм енчĕксене

силлесе,
Сирĕн пата
Парма çеçпĕлĕсене
мĕншĕн ăсатмаççĕ
çӳл чунлă мусьюсем?!
Мадмуазель
пĕр сассăр.
Кĕрлев анать
трактир çине,
мачча çине,
пирĕн çине.
Ку—кĕрлевлĕ сас—
ташă карнавалĕнче асать
Парижри
янравлă
пĕтĕм Монпарнас.
Каçарăр тархасшăн,
шăла хăйракан сăввăмсемшĕн,
шăрш çапнă
лӳшкенчĕксене
кăтартнишĕн.
Анчах
Парижра
ытла та
йывăр
хĕрарăма,
вăл—
ĕçлет пулсан,
сутăнмасть пулсан
харама.

## УЛТӐ МАНАШКА

Вӗсем  
пӗркенчӗкпе пӗркенӗ  
            ӑшаланӑ ҫӗрулми пек  
                        питсене,  
мунча курман  
            хура негртан та  
                        хурарахскерсем—  
ултӑ  
  сӑваплӑ  
    католичка—  
ларчӗҫ  
  „Эспань“  
      пароход ҫине.  
Умран та,  
    хыҫран та—  
        пӑявран  
          тикӗсрех,  
хулӗсенчен  
            шалӗсем усӑннӑ—  
                        пӑтаран ҫакнӑ пек.  
Пит-куҫ таврашне

чăлт шурă чĕнтĕрпе
ункăлатнă,—
çапла Мăнкуна
сысна çурине
ăшаласа
чĕнтĕрлетсе
ĕлĕк лартнă.

Ан тив
ĕмĕр сакки
кунçулăмăрпа—
тултăрах—
çак кулăша анчах
аса
илес
пулать:
анаслас килни
çăвара
картарать
Мексика заливĕнчен те
сарлакарах.
Урăскерсем,
тăрна куçĕ пек
тасаскерсем—
пĕрле,
эскадронĕпе,
çиме лараççĕ.
Апат хыççăн пĕрле
уборнăйне анаççĕ,
пĕри анаслать—
улттăн анаслаççĕ.

Хĕрарăма
симметриллĕх
илем кӳрет.
Анчах кусен
вăл вырăн—
путăк,
пĕр путăкĕнче—
хĕрес,
тепринче—
арăсланпа
Пий сăнлĕ
медальсем...
Шурăмпуç
хăпара пуçласан,
куçсене чармакласа,—
çывăрасса
райра
(кайран!)
ытларах
çывăратпăр тесе,—
дирижерсăр оркестр пек
кăлараççĕ
ултă кĕнеке—
евангели кĕнекисене.
Пыратăн çĕрле—
вĕсем ĕнĕрлеç.
Ир çĕкленет хĕрелсе—
вĕсем
куç хупман-ха—
аçа çапмансем!

Кăнтăрла та,
çĕрле те,
каçпа та,
ирпе те
лараççĕ вĕсем—
лараççĕ,
лăркаççĕ
турă ухмахĕсем.
Анчах вăхăт кăшт çеç
каçала сулăнсан,
кабина
анаççĕ
пăшăлтатса,
вуникĕ калуш
пĕрле тăхăнаççĕ,
унтан каллех
тухаççĕ,
унтан каллех
пуççапнă пек
тăваççĕ.
Манăн
Испани чĕлхипе
чухласчĕ!
Хаяр çиллĕмпе ыйтасчĕ:
Ангел чĕпписем,
тӳремĕн
поэта
ответ парсамăрччĕ,—
эсĕр
çынсем

пулсан,
камсем
ула кураксем?
Ответлĕр!
Ула кураксем пулсан,
вара мĕншĕн вĕçместĕр?
Агитпропщиксем!
Ан тапаланăр,
ан та чун хурăр.
Пĕтĕм çĕр чăмăрне
ревизилесе тухăр.
Турра ĕненмен
чăн чаплă çын та
Çакăнтан
мăшкăлрах
шарж
шухăшласа тупас çук!
Савăн,
хĕрес çумне çакнă
Иисус!
Ан
ан
пăталанă хăмаран.
Анчах тепре килсен—
кунта
ура ан пус,
кичемлĕхрен
эс пурпĕр çакăнăн
каштаран.

## ЛИТЕЙЩИК КОЗЫРЕВ ИВАН ХӐЙНЕ ҪӖНӖ ХВАТТЕРЕ ВЫРНАҪТАРНИ ҪИНЧЕН КАЛАСА ПАНИ

Эп
пролетарий.
Ваклу кирлех те мар.
Пулӑшмӗ.
Хай, пурӑннӑ,
анне ҫуратсан,
тӗнчере.
Кӗтмен ҫӗртенех
ӗҫҫар килҫурчӗн
ушкӑнӗ
мана
вырӑнаҫтарать хваттере.
Анлӑшӗ—
ак!
Ҫӳллӗшӗ—
ак!
Уҫӑлтарнӑ,
ҫутатнӑ,
ӑшӑтнӑ та...

Пуринчен ытларах
чуна ҫӗклерӗ ҫак:
вӑл—
шӗкӗр уйӑх ҫутинчен те
ҫутӑ,
ну ӗнтӗ
ним те кирлӗ мар:
вӑл—
канлӗ,
пилленӗ кунҫултан та
анлӑ,
мӗн-ха унта ҫӑвар кар,
вӑл—
ванна.
Шыв кранра—
пӑртан усалрах,
тепӗр кранне,
вӗрине,—
ан тӗрт пӳрнӳне.
Сиввипе
пит-куҫна
ҫума пултаран,
вӗрипе—
тар чупан йӗрсене.
„Сив"
тет пӗр кран,
„Вӗр"
тесе пӗлтернӗ тепӗрне.
Ывӑнса таврӑнан,
ҫакӑнас килетӗ.

Яшка та чĕрене
пымасть,
чей те кантармасть
ăш çуннинчен.
Чарлан пек чӳхенкеле-ха,
вилнĕ çын та ахăл-ĕхĕлтетĕ
çав
чӳхенӳ кăтăкланинчен.
Социализма
хăнана килнĕ пек туйăнать.
Кăмăл тулнипе
сывлăш пӳлĕнет вĕт шăлт.
Йĕмне—
çеккĕле,
блузăна—
пăтана,
супăнне—
аллуна,
вара...
шăмпăлт!
Ларан.
Çăвăнăн,
çăвăнан,
çăвăнатăн...
Кĕскен—
шампăртатан йăлăхиччен.
Ха,
комнăтăрах çулла та
Атăл!
Пароходсем,

пулăсем
çукки çеç иккен.
Ху çинче
вунă çуллă пылчăк пулсан та,
çăка хуппи пек сĕвĕнет.
Йăвашшăн
ванна кранне
пăран та
куçран çухалать
пылчăк шыв,
мур шăласшĕ!
Парланан тăк
парланан уш...
çавăнтах—
çавăр çӳлти тыткине,
вара
вĕт ала витĕр пек
йăш-йăш...
çăмăр-душ
тытăнать пĕрĕхме.
Мĕн чухлĕ ачашлăх
çав душра!
Нимĕнле сĕрĕм-мур та
сана тивес çук.
Çӳçне якатать,
хăлхуна кăтăклать...
Йалтах сар çу—
юхать валакри пек
ик хул хушшипе.

Типĕтен пӳ-сине
    лапсăркка кушак пек
        çăмламас алшăллипе.
Пусан урайне—
    урай мамăк пек.
Таса кĕпе тăхăнса
    алăк пек тĕкĕре пăхан.
пăхан та—
    шухăшсем капланаççĕ:
— Питрех те
        тӳрĕ,
питрех те
        аван
çакă
  пирĕн
    Совет
        Влаçĕ.

## ЛАЙĂХ ТЕНИ МĔН ТЕНИ, ЯПĂХ ТЕНИ МĔН ТЕНИ

Ывăлĕ,
  чи кĕçĕнни,
ашшĕ патне пынă:
— Лайăх тени мĕн тени,
япăх тени мĕн тени?—
ашшĕнчен вăл
    ыйтнă.
Пытармастăп,
    тупата,—
итлĕр-ха, атсемĕр,—
ашшĕ панă ответа
çакăнта кĕртетпĕр.
— Кăра çил килсен вăр-вар,—
пăр çапсассăн каскăн,—
ăнланаççĕ—
  ку начар
уçăлма тухмашкăн.
Çăмăр иртрĕ
ăшшăн çеç—
тĕнчипех

хӗвеллӗ.
Ватти-вӗттисемшӗн те
ку вара
пит меллӗ.
Ача хӑрӑмран хура-и,
пичӗ-и
лапраллӑ,—
ӳчӗ ун хӗн ҫеҫ курать,
ку ӗнтӗ вӑл
паллӑ.
Ача
пурӑнсассӑн туслӑ
супӑньпе,
шӑлщеткипе,
ку ача вӑл
пит ӑслӑ,
питӗ кӑмӑллӑ,
чипер.
Пӗр-пӗр чӑрсӑр
ҫиллемес
вӑйсӑра хӗнет-тӗк,
ман ӑна
кӗртес килмест
ҫак кӗнекене те.
Ку ак кӑшкӑрать:
— Ан ҫап
хӑвӑнтан кам пӗчӗк:
Питӗ лайӑх ку ача,
ӑслӑ, тӑнлӑ
питӗ.

Калăпăр,
эс пÿскене,
кĕнекене çуртăн—
октябреноксем сана:
— япăх,—теççĕ пурте.
Ача юрататъ пулсан
ĕçе те,
хута та,—
эп ăна хаваслансах
сăвăра
мухтатăп.
Ула куракран вĕççе
пĕри тарнă—
çитĕр!
Ку ача хăравçă çеç
Ку вăл
япăх питĕ.
Ку ак хăй
вершук кăна,
хаяр-вăйлă кайăкпа
тавлашать-çке
вирлĕн.
Паттăр йĕкĕт;
лайăх вăл,
пурнăçра пит кирлĕ.
Ку ак
пылчăка кĕрет,
пылчăкшăн
хавас вăл.
Ун çинчен калас тÿрех:

япăх та
  тăрлавсăр.
Ку ак
  аттине тасатнă,
калушне те
  çунă.
Вăл хăй
  пĕчĕкçеç пулсан та
питĕ лайăх çын вăл.
Кашнине
  калап татах
пĕл те,
  ан ман ӳлĕм—
ывăл халь тăмсай-тăк,
ӳсĕ,
  тăмсай пулĕ.
Пĕчĕк ывăл
  савăнсах
кайрĕ—
  тытрĕ ĕмĕт:
„Лайăх тăвăп
  яланах,
япăх тумăп
  ĕмĕр".

## МАЙ

Аставатăп
   ĕлĕкхи
      Май пĕрремĕшне:
вăрттăн
   пыраттăм
      вĕçри çуртсен хыçне.
Утаттăмччĕ
   çивччĕн
      пăхса:
курăнмасть-и жандарм,
   казак.
Шанчăклисем
   хурала
      тăратчĕç,
васкавлă
   сăмах
      шăппăн янратчĕ.
Хўрен
   хĕм ялав кăларса
      çирĕппĕн тытнă—
блузăсен

пĕчĕк ушкăнĕ
пирĕнпе утнă.
Ут ури—
çатăртатрĕ
хăрнă турат:
— Тĕрмене!
хĕç айне!
шăхăр,
саламат!—
Ĕмĕт
сӳнмен!
Пулнă
мăнă.
Пĕлнĕ—
хыçра
савăт йышĕ тăнă.
Ялав йăтнă çын
пулнă
хĕç айне,
анчах вăл пĕлнĕ
лайăх
вăрлăх
акăннине.
Вăхăт çитĕ—
шăтнисен
шутне
виçеймĕн,—
миллионăн
хĕрлĕ ялав
çĕкленĕ.

## УХМАХЛА ЙӐЛА

Ҫат та ҫат! ҫеҫ
  илтĕнет сире
Кашни учрежденирех.
Кӑна ĕнтĕ
  алӑ парса
Грипп
  ҫӳреҫ ҫынсем сарса.
Анчах,
  бациллӑсем,
    ан асӑр!—
Виза
  Наркомздрав памасӑр.
Ҫавӑнпа стена ҫинче
  пурне те систерсе,
Пĕлтерӳ хучĕ
  тӑрать ак ҫиҫтерсе:
— Эпидемирен
  сыхланӑр—
Пĕр-пĕрне
  алӑ ан парӑр!—
А плакачĕ умĕнче
  помбух
Ларать сывласа чух-чух.

Хир чăххи пек
  хăй
  хăюллах мар,
Хăюллах мар та,
  çав тери япшар.
Вулать те плакатне
  айван,
Ĕнтĕ
  алă памăп, тет,
    нихçан.
Вилес килмест вĕт-ха!
Шăши çури пек
  лăпчăнса,
хут хушшинче
  ларать пĕрмай çырса.
Анчах,
  шăпах çав самантра
Начканц
  кĕрет пырса.
Кашниех,
  чинне кура,
Тухать вăл
  алă парса.
Пĕрне—
  ятсăр пўрне.
Тепĕрне—
  шĕвĕрне,
А хăшне-пĕрне
  Лекет вăта пўрне.
Кун пек чух ăçтан

tăрайăн-ха тӳссе,
Помбух чĕри
ӳкет сиксе.
Пӳрне мар—
вĕт
аллинех
Тыттарать ак:—
Сыви-ха!
Савнирен те
хĕрӳрех
Астарать ку
помбуха.
„Хăть мĕн каласассăн та
Этем чăтас çук кунта.
Принцсем мар çавă—
Çăва тĕпне
принцип-масарĕ“.
Çĕртине те çӳлтине,
Чир-чĕрне те микробне—
Пĕтĕмпех
помбух манса
Ал тытать
каçса кайсах.
Кунашкал
вăл
ырлăха
Нихăçан та курман-ха.
А тепĕр кунне,
ирпе
Çăвăнать вăл супăньпе.

Анчах та унӑн вӑхӑчӗ
  иртет ҫукпа—
Ӗнтӗ ак помбух
  чирлет гриппа.
Икӗ хулӗ хушшине
  Чикет термометрне.
Градус
  вӑтӑр саккӑртан
Иртет ак пӑртак тӑрсан.
Пӗтрӗ,
  пӗтрӗ мӗскӗн,
    ӳпӗнчӗ—
Тухтӑрӗ те
  ҫӑлас ҫук ӗнтӗ.
Ҫунан ҫурта ҫинче вӗҫен
Лӗпӗш пек
  ҫӗтрӗ этем.
Эп —
  тӗрлӗ мехел-йӑланӑн
чи курайман тӑшманӗ.
Эп—
  хурапа-шурра
    лайӑх курнӑскер—
Помбух ҫинчен
  сӑмах вӗҫлеп кӗскен:
Пурнасса та
  вӑл
  пурнайман ӑслӑх,
Вилессе те
  вилнӗ тӑмпуҫлах.

# ТУПМАЛЛИ

*Стр.*


Революци поэчӗ (умстатья) . . . . . . . . . . . . 5
Лайӑх (*Стихван Шавлы куҫарнӑ*) . . . . . . . . 45
Совет паспорчӗ ҫинчен . . . . . . . . . . . . . . 54
Нетте юлташа—парохода—этеме . . . . . . . . . 59
Тӗп пултӑр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 64
Сывпуллашни . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 68
Вунӑ ҫул юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . 70
Килелле (*Арк. Эсхель куҫарнӑ*) . . . . . . . . . 73
Хусан (*В. Услипе И. Алтын-Баш куҫарнӑ*) . . . 77
Ҫулла дачӑра Владимир Маяковский курнӑ тӗлӗнмелле мыскара (Арк. Эсхель куҫарнӑ) . . . 80
Юбилей сӑвви (*Стихван Шавлы куҫарнӑ*) . . . . 85
Сергей Есенина . . . . . . . . . . . . . . . . . 98
Парижанка . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 106
Ултӑ манашка . . . . . . . . . . . . . . . . . . 110
Литейщик Козырев Иван хӑйне ҫӗнӗ хваттере вырнаҫтарни ҫинчен каласа пани . . . . . . 115
Лайӑх тени мӗн тени, япӑх тени мӗн тени (*Арк. Эсхель куҫарнӑ*) . . . . . . . . . . . . . 120
Май (*Стихван Шавлы куҫарнӑ*) . . . . . . . . . 124
Ухмахла йӑла (*Гр. Краснов куҫарнӑ*) . . . . . . . 126

Редактор **Н. И. Юмангай**

Подписано к печати 26/II-41 г. Печатных листов 4,25
4,3 уч. авт. л. Тираж 3000 экз. НТ 2335
Заказ № 06.

Отпечатано в тип. № 1 НКМП ЧАССР, г. Чебоксары.

Цена 3 руб. 50 к.

В. МАЯКОВСКИЙ

# СТИХИ

На чув. языке

Госиздат ЧАССР
1941